...им. М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул
Март
14
ЭРНЕКУН
№ 53 (8705)
Хакĕ 20 пус.
35-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

ССР СОЮЗĔН МИНИСТРĔСЕН СОВЕТĔНЧЕ. Наука, изобретени, литература тата искусство енĕпе тунă чи паха ĕçсемшĕн 1951 çулшăн Сталинла премисем памалла тăвасси çинчен (1 стр.).

И. Рябцев.—Ленинăн марксистла партин идеологиллĕ никĕсĕсем çинчен калакан гениллĕ ĕçĕ. В. И. Ленинăн «Мĕн тумалла?» кĕнеки пичетленсе тухнăранпа 50 çул çитнĕ тĕле (2 стр.).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ. Н. Волков.—Парторганизацисен ответлăхне ÿстермелле; Райкомсен пленумĕсемпе парти активĕн пухăвĕсенче (3 стр.).

С. Юшков.—Наукăпа тĕпчев экспедицийĕ (3 стр.).

М. Осипов.—Сĕнтĕр районĕнче сысна ĕрчетес ĕç мĕншĕн юлса пырать (3 стр.).

Совет Правительстви Германипе мирлĕ договор тăвас пирки США, Великобритани тата Франци Правительствисене панă нота çинчен урăх çĕршывсенче мĕн сыраççĕ (4 стр.).

Тĕнчери çĕршывсен Мускаври экономикăллă канашлăвĕ умĕн (4 стр.).

Фредерик Жолио-Кюри чĕнсе калани (4 стр.).

Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Греци патриочĕсене хÿтĕлесе (4 стр.).

Çамрăк коммунистсене воспитани парасси

Совет çыннисем большевиксен партийĕ, аслă çулпуç Сталин юлташ ертсе пынипе коммунизм строительствин пур участокĕсенче те чаплă çĕнтерÿсем тăваççĕ. Коммунистсен партийĕн пĕтĕм ĕçĕ совет халăхĕн аслă ĕмĕчĕпе тĕллевне пĕтĕçтерсе тăрать, совет çыннисене пĕрмай малалла кайма, çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнÿсем тума вăй-хăват парать.

Пирĕн парти ĕççыннисен анлă массипе тачă çыхăнса тăнипе, коммунистсем хăйсем çав тери çирĕп пĕтĕçсе тăнипе тата халăхсен кĕрешĕвне марксистла-ленинла теори тăрăх ертсе пынипе вăйлă. Совет халăхĕ Ленин—Сталин партине, пирĕн историллĕ пысăк çĕнтерÿсене организацилесе тата хавхалантарса пыракан партие, пĕтĕм чунтан-чĕререн юратать. Çав юрату питĕ те хĕрÿллĕ пулнине рабочи класăн, колхоз хресченĕсен тата совет интеллигенцийĕн чи лайăх представителĕсем ВКП(б) ретне кĕни ÿççăн кăтартса парать.

Партие малалла çирĕплетсе пырас тĕлĕшпе умра тăракан задачăсене палăртса, Сталин юлташ ВКП(б) XVIII-мĕш съездĕнче парти составне тăтăшах лайăхлатса пыма, парти членĕсен ăнланулăхне куллен ÿстерме, коммунизм ĕçне пĕтĕм чĕререн парăннă юлташсене парти ретне пĕрерĕн суйласа илме кирли çинчен кăтартса панă. Парти ретне илмелли ленинла-сталинла йĕркене пурнăçласа, пирĕн республикăри парторганизацисем кĕрешÿре тĕрĕсленнĕ, хăйсене ĕçре палăртнă çынсене—производство новаторĕсене, вăйлă тырпул мастерĕсене, пултаруллă механизаторсене, совет интеллигенцийĕн мухтава тухнă представителĕсене ВКП(б) ретне илеççĕ. Республикăри кирек хăш парторганизацие илес пулсан та, унта халĕ çамрăк коммунистсем нумай. Вĕсене воспитани парасси парторганизацисен куллен туса пымалли питех те пысăк ĕçĕ пулса тăрать.

Коммунистсен политикăллă тата производствăллă активлăхĕ, вĕсен ĕçри пуçарулăхĕпе кĕрешÿри пултарулăхĕ вăйлă пуласси пуринчен малтан, парти членĕсен ăнланулăхĕ, идейăллă-теориллĕ пĕлĕвĕ пысăк пулнинчен килет. Марксистла-ленинла теорипе хĕçпăшалланни коммунистсене ку чухнехи лару-тăрăва, хамăр çĕршывăн пуласлăхне витĕр курса тăма, куллен хи ĕçе коммунизм тăвас тĕлĕшпе умра тăракан задачăсемпе çыхăнтарса пыма пулăшать. Парторганизацисен коммунистсен политикăллă вĕренĕвне халĕ пичçанхинчен те лайăхрах йĕркелемелле. Партин кашни членĕпе кандидачĕ çине тăрса вĕренсен кăна, теориллĕ пĕлĕвĕпе культурине куллен ÿстерсе пырсан кăна парторганизаци хăйĕн организаторла рольне пурнăçласа пыма пултарать.

Çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçре парти пухăвĕсен пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк. Пухусенче сÿтсе явма ыйтусем суйласа илесси тата вĕсене хатĕрлесси çине тимлĕрех пăхни кирлĕ. Кун йĕркинчи кашни ыйтăва пухучченех тĕпчесе вĕренме тата хатĕрлеме çамрăк коммунистсене ытларах хутшăнтарас пулать. Çапла туни вĕсене ÿсме, хушнă ĕçе парти кăтартнă пек туса пыма вĕренме пулăшать. Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозра уйăхра пĕрре е иккĕ пуху ирттереççĕ, кашни пуху коммунистсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăнă. Партбюро пĕр ыйтăва та коммунистсемпе пĕрле тĕплĕ сăнаса вĕренмесĕр пухура лартмасть. Çавăнпа та ку парторганизацире парти пухăвĕсем идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăмра иртеççĕ, коммунистсем пурте пухусенче тухса калаçаççĕ, ĕçри ситменлĕхсене тĕпĕ-йĕрĕпе кăтартса пареççĕ, критикăпа самокритикăна хăюллă сарса пыраççĕ. Çапла вара çак парторганизацире парти пухăвĕ коммунистсене большевикла воспитани памалли шкул пулса тăнă, вăл партин кашни членĕпе кандидачĕсен ответлăхне ÿстерме, вĕсен пуçарулăхĕпе пултарулăхне аталантарма пулăшать.

Коммунистсем парти пухăвĕсенче, политшкулĕсемпе кружоксенче воспитани илеççĕ. Кунпа пĕрлех вĕсене партин куллен хи ĕçне туса пыма активлă хутшăнтарни те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Коммунистсене парти ĕçне активлă хутшăнтармалли паха майсенчен пĕри — ВКП(б) членĕсемпе кандидачĕсене партпорученисем пани. Практикăллă ĕçре çамрăк коммунистсем большевикла пиçĕхÿ тулнаççĕ, массăсен организаторĕсем пулма хăнăхаççĕ.

Партпорученисем парас ĕçре кашни коммунистăн пултарулăхне, опытне тата пĕлĕвне шута илни, хушнă ĕçе тума пулăшни, ĕçе мĕнле тунине куллен тĕрĕслени пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ку тĕлĕшпе Канаш районĕнчи Горкин ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци тĕрĕс тăвать. Парторганизаци кашни коммуниста, унăн шухăш-кăмăлĕпе опытне шута илсе, партиллĕ ĕç парать: пĕрисем—агитаторсем, теприсем — бригадăсенчи боевой листок редакторĕсем, ыттисем—политкружок руководителĕсем е докладчиксем пулса ĕçлеççĕ. Парторганизаци секретарĕ коммунистсем партпорученисене мĕнле пурнăçланине тăтăшах тĕрĕслет, вĕсен ĕçĕсем çинчен парти пухăвĕсенче те сÿтсе яваççĕ. Парти ĕçне активлă хутшăнтарнă май парторганизацири коммунистсен политикăллă тата производствăллă активлăхĕ ÿссе пырать.

Коммунист кирек хăш ĕçре те ыттисене пример кăтартма тивĕç. Коммунизм строительствин пур участокĕсенче те унăн никамран та лайăхрах, тухăçлăрах ĕçлес пулать, çĕннине тата малта пыраканнине çийĕнчех туйса илме, вĕсене аталантарса пыма тăрăшас пулать. Парти организацийĕсен çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçре яланах çакна асра тытмалла: парти членĕсемпе кандидачĕсем хăйсен авангардлă рольне, пуçарулăхне тата пĕтĕм вăй-халне анлă палăртчăр, массăсен организаторĕсем, вĕсен политикăллă вожакĕсем пулса тăччăр. Пирĕн парти хăйĕн членĕсем активлă ĕçленипе, пĕрлĕхлĕ пулнипе, кашнийĕн вăй-хăватне пĕр тĕллев тавра пĕтĕçтернипе вăйлă.

Парторганизацисен шалти ĕçĕсене вăйлатас тата коммунистсен авангардлă рольне ÿстерес тĕлĕшпе парти групписем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Халĕ ĕнтĕ предприятисенче кăна мар, колхозри уй-хир бригадисенче те, фермăсенче те, эсвăн пекех трактор бригадисенче те партгруппăсене курма пулать. Анчах парти комитечĕсем вĕсен паха опытне çителĕксĕр сарса пыраççĕ. Партин уйрăм райкомĕсем, сăмахран, ВКП(б) Куславкка райкомĕ, коммунистсен вăйне уй-хир бригадисемпе фермăсем тăрăх тĕрĕс вырнаçтарма тăрăшман пирки, партгруппăсем сахал тунă. Партгруппăсем тăвасси, вĕсене ертсе пырасси — партин шалти ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе умра тăракан пысăк задача.

ВКП(б) Чăваш обкомĕн IX-мĕш пленумĕ, пур парторганизацисенче çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕç çителĕксĕр пулса пынине палăртса, ку ĕçри çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса пачĕ. Çамрăк коммунистсемпе куллен ĕçлемен пирки ĕнтĕ нумай партгорганизацисенче парти кандидатĕнче темиçешер çул хушши тăракансем йышĕ пысăк. Парторганизацисем умĕнче çакăн пек задача тăрать: çамрăк коммунистсене воспитани парас тĕлĕшпе парти комитечĕсен, партбюросен тата парторганизацисен секретарĕсен ответлăхне ÿстермелле, кашни коммуниста парти ĕçне тата теориллĕ вĕренĕве хутшăнтармалла, партипе государство дисциплинине çирĕп пурнăçласа пыма вĕрентмелле. Партин кашни членĕпе кандидачĕн колхозра — артель хуçалăхне малалла аталантарас, тырпул тухăçлăхне, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тупăшне ÿстерес, малта пыракан çĕрĕç наукине вĕренес, çĕнĕ техникăпа тухăçлă усă курас тесе пĕтĕм вăй-хăватпа ĕçлемелле; фабрикăсемпе заводсенче, транспортра, учрежденисенче — ĕç тухăçлăхне ÿстерес, продукци пахалăхне лайăхлатас, унăн хăйне ларăкан хакне йÿнетес, перекет режимне çирĕп пурнăçлас тĕлĕшпе хăйĕн пултарулăхĕпе пуçарулăхне анлă палăртмалла.

Чăваш АССР промышленноçне, ялхуçалăхне тата культура строительствине малалла аталантарма партин Центральнăй Комитечĕпе Совет Правительстви панă заданисене пурнăçлассишĕн кĕрешесси, çак ĕçре массăсен чăн-чăн пултаруллă организаторĕ пуласси коммунистсен пархатарлă тивĕçĕ пулса тăрать. Çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçе çÿлĕ пусăма çĕклесен кăна умра тăракан пысăк задачăсене ăнăçлăрах пурнăçласа пыма пулать.

Малта пыракан колхоз опычĕпе паллашма

СĔМĔРЛЕ, мартăн 13-мĕшĕ. (Хамăр корр.) Мускав облаçĕнчи малта пыракан колхозсен ĕç опычĕпе паллашас майпа «Комбинат» колхоз председателĕ П. Моисеев, уй-хир бригадисен бригадирĕсем А. Моисеев, П. Черкесов, Е. Киселев юлташсем, фермăсен заведующийĕ Ф. Ильгачкин тата малта пыракан колхозник П. Йăваков юлташ Мускав облаçне экскурсие тухса кайрĕç. Вĕсем колхозра тата Мускаври Тимирязев ячĕпе тăракан ялхуçалăх академийĕнче, историллĕ ытти вырăнсенче пулаççĕ.

ССР СОЮЗĔН МИНИСТРĔСЕН СОВЕТĔНЧЕ

Наука, изобретени, литература тата искусство енĕпе тунă чи паха ĕçсемшĕн 1951 çулшăн Сталинла премисем памалла тăвасси çинчен

ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ наука енĕпе тунă чи паха ĕçсемшĕн, паллă изобретенисемшĕн, производство ĕçĕн меслечĕсене тĕпрен лайăхлатнăшăн тата литературăпа искусство енĕпе сырнă чаплă произведенисемшĕн 1951 çулшăн Сталинла премисем памалла тунă.

I.

Наука енĕпе тунă чи паха ĕçсемшĕн памалли Сталинла премисем

а. Физика наукисем енĕпе

200.000 тенкĕ памалли ПĔРРЕМĔШ степень премисем

1. Николай Васильевич **Белова**, СССР Наука академийĕн член-корреспондентне, СССР Наука академийĕн кристаллографи институчĕн лабораторийĕн заведующине,—кристаллсен атомлă структури пирки çырнă научнăй ĕçсемшĕн, вĕсене 1948—1951 çулсенче çак журналсенче пичетленĕ: «Минералогический сборник Львовского геологического общества», «Доклады Академии наук СССР», «Известия Академии наук СССР», «Труды института кристаллографии Академии наук СССР».

2. Сергей Иванович **Вавилова**, академика,—1950 çулта пичетленнĕ «Микроструктура света» тата «Глаз и Солнце» научнăй ĕçсемшĕн.

100.000 тенкĕ памалли ИККĔМĔШ степень премисем

1. Елпидифор Анемподистович **Кириллова**, Одессăри И. И. Мечников ячĕпе тăракан государство университечĕн профессорне,—фотохимически сăрланнă галоидлă кĕмĕлĕн поглощени спекторĕн пĕчĕк структурине тупнăшăн тата тĕпчесе вĕреннĕшĕн: çак тĕпчев ĕçĕсем çинчен 1949—1951 çулсенче «Известия Академии наук СССР», «Успехи научной фотографии», «Труды Одесского государственного университета имени И. И. Мечникова» ятлă журналсенче пичетленнĕ статьясенче каласа панă.

2. Евгений Леонидович **Кринова**, СССР Наука академийĕн Метеоритсем тĕлĕшпе ĕçлекен комитечĕн ученăй секретарьне,—метеоритика енĕпе тунă тĕпчев ĕçĕсемшĕн; çавăн çинчен «Метеориты», «Тунгусский метеорит» ятлă кĕнекесенче тата 1950 çулта «Метеоритика» ятлă сборникра пичетленнĕ «Форма и поверхностная структура коры плавления индивидуальных экземпляров Сихотэ-Алинского железного метеоритного дождя» статьяра каласа панă.

3. Вадим Леонидович **Левшина**, ĕç руководительне, физикăпа математика наукисен докторне, Всеволод Васильевич **Антонов-Романовскине**, физикăпа математика наукисен докторне, Зинаида Лазаревна **Моргенштерна**, физикăпа математика наукисен кандидатне, Зинаида Алексеевна **Трапезникована**,—СССР Наука академийĕн П. Н. Лебедев ячĕпе тăракан Физика институчĕн научнăй сотрудникĕсене,—хăй тĕллĕн çутăлса тăракан çĕнĕ составсене тĕпченĕшĕн тата вĕсем мĕнле çутатнин теорине тĕпчесе пĕлнĕшĕн.

4. Виктор Николаевич **Цветнова**, Ленинградри А. А. Жданов ячĕпе тăракан государство университечĕн профессорне, — высокомолекулярнăй веществосен строенипе свойствисене тĕпчесе пĕлнĕшĕн; ун çинчен 1949—1951 çулсенче «Доклады Академии наук СССР», «Журнал экспериментальной и теоретической физики», «Журнал физической химии» тата «Коллоидный журнал» ятлă журналсенче пичетленнĕ статьясенче каласа панă.

50.000 тенкĕ памалли ВИÇÇĔМĔШ степень премисем

1. Элевтер Луарсабович **Андроникашвилине**, Грузи ССР Наука академийĕн член-корреспондентне, Грузи ССР Наука академийĕн физика институчĕн директорне,—шĕвĕ II-гелин свойствисене пĕлме экспериментлă тĕпчевсем тунăшăн, ун çинчен «Журнал экспериментальной и теоретической физики» журналра 1946—1949 çулсенче пичетленнĕ статьясенче каласа панă.

2. Андрей Борисович **Севернăя**, ĕç руководительне, профессора, СССР Наука академийĕн Крымри астрофизически обсерваторийĕн директорĕн заместительне, Эвальд Рудольфович **Мустеле**, профессора, çав обсерватори пайĕн заведующине,—Хĕвел çинче хромосферăри çутă вăхăтран-вăхăт çиçсе илнине тĕпченĕшĕн.

3. Георгий Анатольевич **Смоленскине**, СССР Наука академийĕн силикатсен химийĕн институчĕн аслă научнăй сотрудникне, Никита Александрович **Торопова**, лаборатори заведующине, Анатолий Исидорович **Борисенкона**, çав институтри кĕçĕн научнăй сотрудника,—сегнетоэлектриксемпе ферритсен физикăпа химилле свойствисене тĕпченĕшĕн, ун çинчен 1949—1951 çулсенче «Доклады Академии Наук СССР», «Журнал технической физики», «Журнал прикладной химии» журналсенче пичетленнĕ статьясенче каласа панă.

б. Механикăпа математика наукисем енĕпе

100.000 тенкĕ памалли ИККĔМĔШ степень премисем

1. Сергей Никитович **Мергеляна**, Армян ССР Наука академийĕн математикăпа механика секторĕн аслă научнăй сотрудникне,—функцисен конструктивлă теорийĕ тĕлĕшпе тунă ĕçсемшĕн, вăл ĕçе 1951 çулта «Труды Математического института имени В. А. Стеклова Академии наук СССР» журналта пичетленнĕ «Некоторые вопросы конструктивной теории функций» статьяра пĕтĕçтерсе каланă.

2. Александр Иванович **Некрасова**, академика, СССР Наука академийĕн Механика институчĕн пайĕн заведующине,—1951 çулта пичетленнĕ «Точная теория волн установившегося вида на поверхности тяжелой жидкости» ятлă научнăй ĕçшĕн.

3. Сергей Михайлович **Никольскине**, СССР Наука академийĕн В. А. Стеклов ячĕпе тăракан математика институчĕн аслă научнăй сотрудникне,—действительнăй переменнăй функцисен сывхарту теорийĕ енĕпе тунă ĕçсемшĕн, вĕсем çинчен 1951 çулта «Труды Математического института имени В. А. Стеклова Академии наук СССР» журналра пичетленнĕ «Неравенства для целых функций конечной степени и их применение» в теории дифференцируемых функций многих переменных» ятлă статьяра пĕтĕçтерсе каланă.

4. Леонид Иванович **Седова**, СССР Наука академийĕн член-корреспондентне, СССР Наука академийĕн В. А. Стеклов ячĕпе тăракан Математика институчĕн аслă научнăй сотрудникне,—«Плоские задачи гидродинамики и аэродинамики» тата «Методы подобия и размерности в механике» ятлă монографисемшĕн, вĕсене 1950 тата 1951 çулсенче пичетленĕ.

50.000 тенкĕ памалли ВИÇÇĔМĔШ степень премисем

1. Шалва Ефимович **Микеладзене**, Грузи ССР Наука академийĕн член-корреспондентне, Тбилисири А. М. Размадзе ячĕпе тăракан математика институчĕн уйрăмĕн руководительне, — математикăра сыхăнтарса хисепленипе анализ тăвас енĕпе тунă ĕçшĕн.

2. Гурий Николаевич **Савина**, Украина ССР Наука академийĕн действительнăй членне, УССР Наука академийĕн машиноведенипе автоматика институчĕн уйрăмĕн руководительне «Концентрация напряжений около отверстий» ятлă научнăй ĕçшĕн. Ку ĕç 1951 çулта пичетленсе тухнă.

в. Техникăллă наукăсем енĕпе

100.000 тенкĕ памалли ИККĔМĔШ степень премисем

1. Макарий Васильевич **Потапова**, Белорус ССР Наука академийĕн член-корреспондентне, гидротехникăпа гидравлика енĕпе тунă тĕпчев ĕçĕсемшĕн, вĕсене 1950—1951 çулсенче виçĕ томлă кĕнеке туса пичетлесе кăларнă.

2. Вадим Васильевич **Соколовскине**, СССР Наука Академийĕн член-корреспондентне, СССР Наука академийĕн механика институчĕн уйрăмĕн заведующине,—«Теория пластичности» текен научнăй ĕçшĕн, ăна 1950 çулта иккĕмĕш изданипе пичетлесе кăларнă.

3. Виктор Сергеевич **Школьникова**, ĕç руководительне, Виктор Павлович **Балашова**, Борис Алексеевич Введенскине, академика, Александр Иванович **Виноградова**, Николай Иванович **Гуляева**, Борис Петрович **Малиновскине**, Рубен Гаевич **Мириманова**, Николай Васильевич **Осипова**, Борис Алексеевич **Шиллерова**—техника енĕпе тунă тĕпчев ĕçĕсемшĕн.

50.000 тенкĕ памалли ВИÇÇĔМĔШ степень премисем

1. Василий Николаевич **Болтинскине**, Мускаври В. М. Молотов ячĕпе тăракан ялхуçалăх механизацийĕпе электрофикаци институчĕн профессорне,—«Работы тракторного двигателя при неустановившейся нагрузке» ятлă монографишĕн, ăна 1949 çулта пичетлесе кăларнă.

2. Семен Яковлевич **Браудене**, профессора, ĕç руководительне, Исаак Еремеевич **Островскине**, Фотий Сергеевич **Санина**, Иван Сергеевич **Тургенева**, Яков Львович **Шамфарова**—институтăн научнăй сотрудникĕсене, Владимир Иванович **Амосова**, Сергей Николаевич **Архипова**, Александр Петрович **Бахарева**, Иван Матвеевич **Безуглăя**, Абрам Львович **Генкина**—инженерсене,—техника енĕпе тунă тĕпчев ĕçĕсемшĕн.

3. Александр Николаевич **Казанцева**, профессора, Радиотехника ыйтăвĕсене наука енĕпе тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен секцин аслă научнăй сотрудникне, Василий Иванович **Игумнова**, инженер-подполковника,—радио сыхăнăвĕ енĕпе тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе тунă научнăй ĕçшĕн, ăна 1951 çулта туса пĕтернĕ.

4. Иван Николаевич **Кидина**, доцента, Мускаври И. В. Сталин ячĕпе тăракан хурçă институчĕн директорне,—«Термическая обработка стали при индукционном нагреве» ятлă научнăй ĕçшĕн, ăна 1950 çулта пичетлесе кăларнă.

5. Михаил Самойлович **Неймана**, Мускаври Серго Орджоникидзе ячĕпе тăракан авиаци институчĕн профессорне,—«Триодные и тетродные генераторы сверхвысотных частот» ятлă научнăй ĕçшĕн, ăна 1950 çулта пичетлесе кăларнă.

6. Андрей Сергеевич **Орлина**, Артиллери науки академийĕн действительнăй членне, Мускаври Н. Э. Бауман ячĕпе тăракан аслă техника училищин профессорне,—«Двухтактные легкие двигатели» ятлă монографишĕн, ăна 1950 çулта пичетлесе кăларнă.

г. Хими наукисем енĕпе

200.000 тенкĕ памалли ПĔРРЕМĔШ степень премисем

1. Николай Алексеевич **Преображенскине**, Мускаври М. В. Ломоносов ячĕпе тăракан химин питĕ тĕрĕс технологийĕн институчĕн профессорне,—алкалоидăсене (ÿсентăрансенчи япаласене) сăнаса пĕлес енĕпе тунă тĕпчев ĕçĕшĕн, ку ĕçе «Доклады Академии наук СССР» тата «Журнал общей химии» ятлă журналсенче 1949—1951 çулсенче пичетленнĕ статьясемпе вĕçленĕ.

2. Илья Ильич **Чернява**, академика, СССР Наука академийĕн Н. С. Курнаков ячĕпе тăракан пĕтĕмĕшле химипе органикăллă мар химин институчĕн директорне,—шалти сферăра веществосем пĕрпĕрин вырăнне йышăнассинче тата веществори япаласен пайĕсен химири пĕрлешĕвĕсем мĕнле ушăнса пынине сăнас енĕпе тунă тĕпчев ĕçĕшĕн, вĕсем çинчен «Известия сектора платины Академии наук СССР» тата «Доклады Академии наук СССР» ятлă журналсенче 1949-мĕшпе 1951-мĕш çулсенче пичетленнĕ статьясенче каласа панă.

100.000 тенкĕ памалли ИККĔМĔШ степень премисем

1. Юрий Александрович **Горин-Хаста**, профессора, Пĕтĕм Союзри С. В. Лебедев академик ячĕпе тăракан, синтетически каучука тĕпчесе пĕлес енĕпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев институчĕн лаборатори заведующине,—спиртран искусственнăй каучук тумалли углеводород йышши веществосем мĕнле майпа пулса пынине, вĕсем пулса пырассине хăвăртлатма тĕрлĕ веществосемпе — катализаторсемпе усă курас ĕç енĕпе тунă тĕпчев ĕçĕсемшĕн; ку ĕçсене «Труды Всесоюзного научно-исследовательского института синтетического каучука» тата «Журнал общей химии» ятлă журналсенче 1949—1951 çулсенче пичетлесе кăларнă.

2. Георгий Митрофанович **Панченкова**, Мускаври И. М. Губкин академик ячĕпе тăракан нефть институчĕн профессорне,—шĕвексен сыхăнăвĕн теорийĕ енĕпе тунă тĕпчев ĕçĕшĕн; ку ĕçсем «Доклады Академии наук СССР» тата «Журнал физической химии» журналсенче 1949—1951 çулсенче пичетленсе тухнă.

50.000 тенкĕ памалли ВИÇÇĔМĔШ степень премисем

1. Ашот Тигранович **Ваграмяна**, СССР Наука академийĕн Физикăллă хими институчĕн лабораторийĕн заведующине,—металсен электросажденийĕ енĕпе тунă тĕпчев ĕçĕсемшĕн; вĕсем çинчен «Электросаждение металлов» ятлă монографире каласа панă, ку монографи 1950 çулта пичетленсе тухнă.

2. Гильм Хайревич **Камая**, Хусанти С. М. Киров ячĕпе тăракан химипе технологи институчĕн профессорне,—наркăмăшпа фосфорăн органикăллă сыхăнăвĕсем енĕпе тунă тĕпчев ĕçĕсемшĕн; вĕсем çинчен «Доклады Академии наук СССР», «Известия Казанского филиала Академии наук СССР» тата «Журнал общей химии» ятлă журналсенче 1949—1951 çулсенче пичетленсе тухнă статьясенче каласа панă.

д. Геологипе географи наукисем енĕпе

100.000 тенкĕ памалли ИККĔМĔШ степень премисем

1. Иван Антонович **Ефремова**, профессора, СССР Наука академийĕн палеонтологи институчĕн лабораторийĕн заведующине,—«Тафономия и геологическая летопись» (çĕр çинчи фаунăсем палеозой тапхăрĕнче çĕр айне пулса пыни çинчен) ятлă научнăй ĕçшĕн, вăл 1950 çулта пичетленсе тухнă.

2. Александр Александрович **Изотова**, Геодезин, аэросъемкăн тата картографин центральнăй наукăпа тĕпчев институчĕн аслă научнăй сотрудникне тата Феодосий Николаевич **Красовскине**, — çĕр формине тата унăн пысăкăшне тĕпчесе пĕлес енĕпе тунă тĕпчев ĕçĕсемшĕн.

3. Петр Филимонович **Швецова**, геологипе минерал наукисен докторне, СССР Наука академийĕн аслă научнăй сотрудникне,—çĕр айĕнчи шывсем мĕнле тухса йĕркеленин çĕнĕ законĕсене тĕпчесе пĕлнĕшĕн.

(Малалли пулать).

Ленинăн марксистла партин идеологиллĕ никĕсĕсем çинчен калакан гениллĕ ĕçĕ

(В. И. Ленинăн „Мĕн тумалла?“ кĕнеки пичетленсе тухнăранпа 50 çул çитнĕ тĕле)

1902 çулхи март уйăхĕн вăррине творчествăллă марксизмăн классикăллă произведенийĕ, В. И. Ленинăн «Мĕн тумалла?» кĕнеки пичетленсе тухнă. Владимир Ильич хăйĕн çав чаплă ĕçĕнче «экономизм» вăл оппортунизм, хвостизм тата самотек идеологийĕ пулнине тăрă шыв çине кăларса çĕмĕрсе тăкнă. «Мĕн тумалла?» кĕнекене Российăра сарнине пула çав кĕнеке тухнă хыççăн пĕр çулталăкран «экономизмăн» идейăллă позицийĕсенчен кӳрентерекен асаплӳ çеç тăрса юлнă, «экономист» тенĕ ята вара парти работникĕсем нумайăшĕ мăшкăл вырăнне хурса йышăнма пуçланă.

Анчах та В. И. Ленинăн «Мĕн тумалла?» кĕнекин историллĕ пĕлтерĕшĕ «экономизма»—пĕтĕм тĕнчери оппортунизмăн хăйне уйрăм пĕр пайне çĕмĕрсе тăкнинче кăна мар. Ленинăн çав кĕнеки, вырăссен пĕрремĕш революцийĕ умĕн пичетленсе тухăскер, Российăра революциллĕ марксистла парти туса хурас ĕçре, Российăри пролетариатăн пурнăçĕпе кĕрешĕвĕнче питех те пысăк вырăн йышăнса тăнă. Марксистла шухăшăн çав чаплă произведенийĕнче В. И. Ленин большевиксен партийĕн идеологиллĕ никĕсĕсене гениллĕ хатĕрлесе туса панă. Большевиксен партийĕ совет халăхне социализмăн аслă çĕнтерĕвĕсем патне илсе çитерчĕ тата халхи вăхăтра пирĕн Тăван çĕршыва коммунизм çĕнтерĕвĕ патне илсе пырать.

Ленинăн çак ĕçĕн пĕлтерĕшне Сталин юлташ питех те уççăн кăтартса панă. ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕнче вăл çапла çырнă:

«Мĕн тумалла?» кĕнекен историллĕ пĕлтерĕшĕ Ленин çав чаплă кĕнекере çаксене туниче пулать:

1) Марксистла шухăшăн историнче никамран малтан оппортунизмăн идейăллă пуçламăшĕсене тымарĕсем таранах уççа кăтартнă, оппортунизмăн пуçламăшĕсем, ниминрен малтан, рабочисен юхăмĕн стихийлăхĕ умĕнче пуç тайнинче тата социализмлă ăс-тăнăн рабочи юхăмĕнчи рольне пĕчĕклетнинче пулнине кăтартса панă;

2) Теорин, ăнланулăхăн пĕлтерĕшне, рабочисен стихийлă юхăмне революцилентерсе тата ертсе пыракан вăй пулса тăракан партин пĕлтерĕшне çӳле çĕкленĕ;

3) Марксизмăн тĕп положенине, марксистла парти вăл—рабочисен юхăмĕ социализмпа пĕрлешсе тăни пулать текен положенине, питех те тĕплĕн никĕслесе панă;

4) Марксистла партин идеологиллĕ никĕсĕсене гениллĕ хатĕрлесе туса панă.

Пролетариллĕ революционерсен нумай ăрăвĕсем Ленинăн çак чаплă ĕçĕ тăрăх вĕренсе пынă. Ленинăн «Мĕн тумалла?» ятлă гениллĕ произведенийĕ паян кунччченех совет халăхĕн, пĕтĕм тĕнчери коммунизмлă юхăмăн идейăллă хăватлă хĕçпăшалĕ пулса тăрать. Çав кĕнеке мĕнпур çĕршывсенчи коммунистсене Америка империалисчĕсене хирĕç, ирĕклĕхпе демократишĕн кĕрешес, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешес ĕçре революциллĕ ленинла-сталинла теори ялавне çӳлте тытса пыма вĕрентет.

I.

В. И. Ленинăн «Мĕн тумалла?» кĕнеки Российăра революциллĕ юхăм çĕкленсе пынă вăхăтра пичетленсе тухнă. Патша Российинче империализмăн мĕнпур хирĕçĕвĕсем пĕр çĕре пухăнса тăнă. Пĕтĕм тĕнчери революциллĕ юхăмăн центрĕ Российăна куçнă. Российăри рабочи класс пĕтĕм тĕнчери империализма хирĕçле революциллĕ юхăмăн авангарĕ пулса пынă.

Пуринчен малтан царизма сирпĕтсе антармалла, çавăнпа вара Российăра капитализма сирпĕтсе антармалли условисене хатĕрлемелле пулнă. Вырăс пролетариачĕн ӳссе пыракан буржуаллă-демократиллĕ революци çулпуçĕн рольне пурнăçламалла пулнă. Рабочи класс хăйĕн çав историллĕ миссине чăн-чăн марксистла парти, социальнăй революципе пролетариат диктатурин партийĕ ертсе пынипе çеç пурнăçлама пултарнă.

Çавăн пек парти, çĕнĕ типлă парти тăвас ыйтăва В. И. Ленин 90-мĕш çулсен пуçламăшĕнчех кăларса тăратнă. Ленин 1895 çулта туна Петербургри «Союз борьбы за освобождение рабочего класса» ятлă организаци рабочи класăн революциллĕ партийĕн пирвайхи пуçламăшĕ пулнă.

РСДРП-ăн 1898 çулта Минскра пулса иртнĕ 1-мĕш съезчĕ Российăри социал-демократиллĕ рабочи партие туса хума пирвайхи хут тытăнса пăхни пулнă. Анчах та РСДРП-ăн 1-мĕш съезчĕ партие туса хурайман. Съезд хыççăн Российăри социал-демократи ретĕнче идейăллă тата организациллĕ сапаланчăклăх тата ытларах вăйланнă.

Çак сапаланчăклăха хӳтĕлекенсем—«экономистсем» пулнă, вĕсем Российăри рабочисен юхăмĕнче вакбуржуалла шухăш саракансем пулнă. «Экономистсем» буржуазин рабочи класс хушшинчи агенчĕсем пулнă, вĕсем рабочисен юхăмĕнчи стихийлăха мухтанă, социализмлă ăс-тăнăн рольне хакламан, парти рабочи класс хушшине революци идейисене саракан, ăна организацилесе тата ертсе пыракан вăй пулса тăнине йышăнман.

«Экономистсем» çапла каланă: царизма хирĕç политикăллă кĕрешӳ туса пырасси рабочи класăн пысăк интересĕ мар, рабочисен тĕп интересĕ—ĕç укçине ӳстерессишĕн, ĕç условийĕсене лайăхлатассишĕн тата ыттисемшĕн хуçасене хирĕç экономикăллă кĕрешӳ туса пырасси пулать, тенĕ. «Экономистсем» сывхарса килекен буржуаллă-демократиллĕ революцире пролетариат ертсе пыракан вăй пулмалли, хресченсем пролетариатăн союзникĕ пулмалли çинчен тăракан ыйтăва пачах йышăнман. Вĕсем рабочисен юхăмне буржуази интересĕсене пăхăнтарма, пролетариат хушшине буржуази идеологине сăрма тăрăшнă.

«Экономизм» ун чухне Российăра марксистла парти тăвас çул çинчи тĕп чăрмав пулса тăнă. «Экономистсене» идея тĕлĕшĕнчен çĕмĕрсе тăкмасăр Российăра рабочи класăн революциллĕ партине туса хума май килмен.

«Экономистсен» оппортунизмне идея енчен çĕмĕрсе тăкас тата марксистла партин идеологиллĕ никĕсĕсене туса хатĕрлес задачăна Ленин хăйĕн «Мĕн тумалла?» кĕнекинче чаплăн татса панă. «Экономистсене» критиклесе, Ленин çав юхăмăн социальнăй тымарĕсене тата унăн идейисем ăçтан пуçланса кайнине уççа кăтартнă. Ленин «экономизм» пĕтĕм тĕнчери оппортунизмăн хăйне уйрăм пайĕ пулнине, «экономистсем» вырăссен çĕрĕ çинче Бернштейн оппортунист майлă тăракан çынсем пулнине кăтартса панă. Бернштейн майлисен буржуалла шухăшĕсене уçса палăртса, В. И. Ленин çапла çырнă: «Хăйĕн содержанийĕ тĕлĕшпе çак юхăмăн аталанса йĕркеленме кирлĕ пулмарĕ: ăна тӳрех буржуаллă литературăран социализмлă литературăна куçарса лартнă» (Соч., 5 том, 326 стр.).

Бернштейн оппортунист майлă çынсем марксизма ревизи тума, унăн революциллĕ содержанине—социализмлă революципе пролетариат диктатури çинчен вĕрентнине пăрахăçлама хăтланнă. Буржуазин шанчăклă тарçисем тата буржуази идеологине саракансем пулса, Бернштейн оппортунист майлă тăракансем рабочи класа реформизм çулĕ çине, буржуазипе килĕшӳ тăвас çул çине тĕксе ярасшăн, ăна буржуазие хирĕç революциллĕ формăсемпе кĕрешес, пролетариат диктатуришĕн кĕрешес çултан пăрса ярасшăн пулнă. Бернштейн оппортунист майлă тăракансем, çав шутрах «экономистсем» те, марксизм вĕрентĕвне буржуази идеологийĕ валли юрăхлă тума юриех пăсса ăнлантарса, хăйсене марксистсем пулнă пек кăтартнă. В. И. Ленин «Мĕн тумалла?» кĕнекере Бернштейн оппортунист майлă çынсем çинчен çапла çырнă: вĕсем «...оппортунизмăн çĕнĕ тĕслĕхĕ пулса тăраççĕ» (çавăнтах, 327 стр.).

II.

В. И. Ленин «Мĕн тумалла?» кĕнекере марксизма—рабочи класăн идеологине хӳтĕлесе хăварнă тата малалла творчествăллă аталантарнă, II-мĕш Интернационал партийĕсенчен тĕпренех уйрăлса тăракан, çĕнĕ типлă партин—марксистла партин идеологиллĕ никĕсĕсене туса хатĕрленĕ.

«Экономистсене» рабочисен юхăмĕн стихийлăхĕ умĕнче пуç тайнăшăн, революциллĕ теорин, социализмлă ăс-тăнăн рабочисен юхăмĕнчи рольне пĕчĕклетнĕшĕн вăйлă критиклесе, В. И. Ленин пролетариатăн класлă кĕрешĕвĕнче революциллĕ теори мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине кăтартса панă. Вăл экономикăллă тата политикăллă кĕрешӳпе пĕрлех теориллĕ кĕрешӳ пролетариатăн класлă кĕрешĕвĕн тĕп формисенчен пĕри пулни çинчен Энгельс кăтартса панисене уйрăмах вăйлă палăртса хăварнă.

Капитализмлă обществăра икĕ идеологи—буржуаллă тата социализмлă идеологи пĕр-пĕринпе кĕрешеççĕ, пĕр-пĕрне хирĕç тăраççĕ тата вĕсем, пролетариатпа буржуази интересĕсем килĕшме пултарайман пекех, пĕр-пĕринпе килĕшме пултараймаççĕ.

«...Ыйту **çапла кăна** тăрать: буржуаллă е социализмлă идеологи. Вăтаçĕрри çук кунта... Çавăнпа та социализмлă идеологие **кирек мĕнле** хакламанни те, унран **кирек мĕнле пăрăнни** те çав вăхăтрах буржуаллă идеологи вăйланнине пĕлтерет» (Соч., 5 том, 355—356 стр.).

Пирĕн вăхăтра Америка империализмĕн реакциллĕ идеологине, çынна курайманлăх идеологине вăрçă тата тĕттĕмлĕх идеологине, класлă тата нациллĕ пусмăрлăх идеологине хирĕç социализмлă идеологи—мир идеологийĕ, халăхсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăх идеологийĕ, халăхсемпе расăсен туслăхĕн идеологийĕ, этемлĕхĕн чи лайăх ăсĕсен ĕмĕрсем тăршшĕнчи ĕмĕчĕсене пурнăçа кĕртнĕ çĕнĕ общество идеологийĕ кĕрешет.

Буржуаллă идеологие Америкăпа Англи миллионерĕсемпе миллиардерĕсене тара кĕрĕшнĕ буржуаллă ученăйсем, социологсем, философсем, сылтăм социалистсем, титовецсем сараççĕ. Юнлă империализм хĕçпăшалне тытса пыракансене ывăнма пĕлмесĕр тăрă шыв çине кăларасси пирĕн идеологи фрончĕн, тĕнчери мĕнпур коммунистсемпе рабочисен партийĕсен кĕрешӳ задачи пулса тăрать.

Марксизм вăл—çутçанталăкпа общество аталанăвĕн законĕсем çинчен вĕрентекен наука, пусмăрпа эксплуатацире пурăнакан массăсен революцийĕ çинчен вĕрентекен наука, мĕнпур çĕршывсенче социализм çĕнтерĕсси çинчен вĕрентекен наука, коммунизм обществи тăвасси çинчен вĕрентекен наука. Марксистла-ленинла теори пролетариатпа унăн партине класлă кĕрешӳ законĕсене пĕлнипе хĕçпăшаллантарать, рабочи класăн революциллĕ кĕрешӳ çулне çутатса тăрать, историллĕ событисем мĕнле аталанса пырассине наука енчен малтанах курса тăма май парать. Марксистла-ленинла теорин мобилизацилекен, организацилекен тата улăштарса çĕнетекен вăйĕ питех те пысăк.

В. И. Ленин революциллĕ теорие революциллĕ практикăна тачă çыхăнтарма кирлине кăтартса панă. Марксистла теори пролетариатăн революциллĕ практикипе пĕрлĕхлĕ пулни рабочисен стихийлă юхăмне пролетариатăн историллĕ задачисене пурнăçа кĕртессишĕн пыракан ăнланулла класлă кĕрешӳ туса хумалли тĕп услови пулса тăрать. Теорипе практикăна татса уйăракан Бернштейн оппортунист майлă тăракансене критиклесе, Ленин «Мĕн тумалла?» кĕнекере çапла каланă: «Революциллĕ теорисĕр революциллĕ юхăм та пулма пултараймасть» (çавăнтах, 341 стр.).

Обществăн малта тăракан революциллĕ вăйĕ—пролетариат унăн марксистла-ленинла теорипе хĕçпăшалланнă политикăллă парти пур чухне кăна хăйĕн историллĕ рольне пурнăçлама—вăл капитализма вилĕм кӳрекенĕ тата хастаррăн социализм тăваканĕ пулса тăма пултарать. Ленин уйрăмах çакна кăтартса панă: «**...Малта пыракан борецăн рольне малта тăракан теори тăрăх ĕçлекен парти кăна пурнăçа кĕртме пултарать**» (çавăнтах, 342 стр.).

«Экономистсем» Российăра II-мĕш Интернационал партийĕсем евĕрлĕ социал-демократиллĕ парти тăвасшăн пулнă. Çав парти никĕсне вĕсем марксизмăн революциллĕ идеологине мар, буржуаллă реформизм идеологине хурасшăн пулнă.

«Мĕн тумалла?» кĕнекере В. И. Ленин марксистла тĕп положени—марксистла парти вăл рабочисен юхăмне социализмпа пĕрлештерни пулнипе питех те лайăх никĕслесе панă. В. И. Ленин рабочисен стихийлă юхăмĕ нумай çулсем хушши ирĕксĕрех тĕттĕмре аташса çӳремелле пулнине, çав юхăма социализмлă ăс-тăн илсе кĕмесен, вăл пурĕ-пĕрех буржуаллă идеологи влиянине лекессине кăтартса панă. Буржуазипе унăн сылтăм социалистла агентури рабочи класс хушшине кирек мĕнле хакпа пулсан та буржуаллă идеологи сарас, рабочисен юхăмне социализмлă ăс-тăн илсе кĕме парас мар, тесе пур майсемпе те усă кураççĕ.

В. И. Ленин çапла çырнă: «...рабочисен юхăмĕн стихийлăхĕ умĕнче **кирек мĕнле** пуç тайни те, «ăс-тăнлă элементăн» рольне, социал-демократи рольне кирек мĕнле хакламанни те,—**хакламан çын хăй çакна тăвасшăн-и е тăвасшăн мар-и—пурпĕрех**,—çавăнпа пĕрлех **вăл рабочисем хушшинче буржуаллă идеологи влиянийĕ вăйланнине** пĕлтерет» (çавăнтах, 354 стр.).

Ленин çапла вĕрентет: научнăй социализм теорийĕ рабочисен стихийлă юхăмĕнчен мар, наукăран çитĕнсе тухать. Рабочи класс капитализм условийĕсенче хăйĕн вăйĕсемпе социализм теорине туса хатĕрлеме пултараймасть, мĕншĕн тесен çакна тума наукăн мĕнпур çитĕнĕвĕсене вĕренсе алла илни кирлĕ, рабочи класăн ун валли капитализм чухне вăхăчĕ те, средствисем те çук. Научнăй социализм теорине рабочисен юхăмĕпе çыхăннă революциллĕ интеллигенци представителĕсем туса хатĕрлеççĕ.

Ленин социализмлă ăс-тăна рабочисен стихийлă юхăмне тулашĕнчен илсе кĕни çинчен тезис кăларса тăратнă тата ăна никĕслесе панă. Социализмлă идеологие, научнăй социализм теорине рабочи класăн теоретикĕсем туса хатĕрлеççĕ, рабочисен юхăмне вара ăна парти, рабочи класăн авангарĕ илсе кĕрет. Научнăй социализм положенийĕсене пропагандăланине малта пыракан рабочисем хапăл туса кĕтсе илеççĕ, научнăй социализм влиянипе панипе вара хăйсем те коммунистсем пулса тăраççĕ.

Ленин кăтартса панă тăрăх, рабочисен юхăмĕпе социализм Российăра, Хĕвеланăçĕнчи пекех, чылай вăхăт хушши пĕр-пĕринпе çыхăнса тăмасăр аталанса пынă, вĕсене пĕр-пĕринпе пĕрлештерессине вара революциллĕ марксистсем пуçласа янă. «Социализма рабочисен юхăмĕпе пĕрлешесси патнелле яни,—тесе çырать Ленин,—К. Маркспа Ф. Энгельсăн чи пысăк ĕçĕ пулса тăрать: вĕсем çав пĕрлешме кирлине ăнлантарса паракан тата социалистсем умне пролетариатăн класлă кĕрешĕвне организацилес задача кăларса тăратакан революциллĕ теори тунă» (Соч., 4 том, 236 стр.).

Российăра социализма рабочисен юхăмĕпе пĕрлештерес ĕçе чи малтан Ленин организациленĕ «Союз борьбы за освобождение рабочего класса» пурнăçласа пыма тытăннă. Анчах та Ленинăн «Мĕн тумалла?» кĕнеки пичетленсе тухнă вăхăтра социализма рабочисен юхăмĕпе пĕрлештерес процесс чылай пулса пĕтмен. Рабочисен юхăмĕн стихийлăхне мухтакан «экономистсем» çапла каланă: социал-демократин рабочисене социализмлă ăс-тăн çулĕшĕ таран çĕклемелле мар, рабочи класс хушшине научнăй социализм идеологине сармалла мар, рабочисен стихийлă юхăмĕ хăех социализмлă ăс-тăн туса хатĕрличчен кĕтсе тăмалла, тенĕ. «Экономистсем» партие рабочисен стихийлă юхăмĕн хыçĕнче çапкаланса пымалла тума хушнă.

Ленин «экономистсен» хвостизмне хирĕç питех те вăйлăн кĕрешнĕ. Вăл вырăссен революциллĕ социал-демократин задачи социализмлă идейăсене пролетариат хушшине сарасси тата рабочисен юхăмĕпе тачă çыхăнса тăракан революциллĕ парти организацилесси пулнине кăтартса панă. Ленин социализмлă ăс-тăна рабочисен юхăмне илсе кĕртес ĕçе социализмлă интеллигенци çеç мар, марксистла парти пĕтĕмĕшпе, вăл шутра çав партин членĕсем пулса тăракан малта пыракан рабочисем те, туса пымаллине кăтартса панă.

Марксистла парти рабочи класăн политикăллă ăнланулăхне туса çитерме, ăна демократишĕн тата социализмшăн революциллĕ кĕрешес шухăшпа вĕрентсе хатĕрлеме тивĕçлĕ.

В. И. Ленин çакна палăртнă: рабочи класс социализмлă идейăсене чылай çăмăллăн ăнланса илет, мĕншĕн тесен научнăй социализм унăн тĕп интересĕсене палăртса пани пулса тăрать. «Час-часах рабочи класс социализм еннелле **стихийлĕн** туртăнать, тесçĕ. Çакă вăл социализм теорийĕ рабочи класс нушалăхĕн сăлтавĕсене пуринчен те таранрах, пуринчен те тĕрĕсрех ăнланма пулăшни енчен илсен, тĕрĕс,—çавăнпа,—çав теори хăй стихийлăх айне **пулмасть пулсан**, çав теори стихийлăха хăйне пăхăнтарса **пырать пулсан**,—ăна рабочисем çăмăллăнах ăнланса илеççĕ» (Соч., 5 том, 357 стр.).

III.

«Мĕн тумалла?» кĕнекере Ленин пролетариатăн унăн революциллĕ партийĕн политикăллă задачисене тĕплĕ кăтартса тата никĕслесе панă. Ун чухне вырăс пролетариачĕн чи çывăхри политикăллă задачи—патша самодержавине сирпĕтсе антарасси тата демократиллĕ республика туса хурасси пулнă. Ленин «экономистсем» политикăллă кĕрешӳ рольне пĕчĕклетнине тата экономикăллă кĕрешӳ пĕлтерĕшне пысăклатса кăтартнине хирĕç, пролетариллĕ политикăна тред-юнионистла формăллă буржуаллă политикăпа улăштарса лартнине хирĕç питех те татăклăн тухса каланă. «Социал-демократирен татса уйăрсан,—тет Ленин,—рабочисен юхăмĕ вакланса каять тата ирĕксĕрех буржуаллăха кĕрсе ӳкет: пĕр экономикăллă кĕрешӳ çеç туса пынипе рабочи класс политика тĕлĕшĕнчен хăйĕн уйрăмлăхне çухатать, ытти партисен хӳрешкийĕ пулса тăрать, «рабочисене ирĕке кăларасси рабочисен хăйсен ĕçĕ пулмалла», тесе ăслăн хушса хăварнинчен пăрăнать» (Соч., 4 том, 343 стр.).

Ленин çапла кăтартса панă: марксистла партин политики II-мĕш Интернационал партийĕсен тата Российăра вĕсен ĕçне туса пыракан «экономистсен» тред-юнионистла реформистла политикинчен тĕпренех уйрăлса тăмалла. «Экономистсем», Хĕвеланăç Европăри реформистсем хыççăн кайса, Российăри рабочи класа ирĕксĕрлесе тред-юнионистла реформистла политикăна йышăнтарма хăтланнă. Çав политикăн буржуалла шухăшне Ленин тăрă шыв çине кăларнă.

Ленин рабочи класăн политикăллă кĕрешĕвĕ тĕп вырăн йышăнса тăнине кăтартса панă тата экономикăллă кĕрешӳпе политикăллă кĕрешĕве пĕрĕ-пĕринпе çыхăнтарса туса пыма кирлине уйрăмах палăртса хăварнă. Ленин пролетариата—революцин çулпуçне политикăллă воспитани парас ĕçе пысăк вырăна хунă. Вăл çапла çырнă: «Рабочи класа политика тĕлĕшĕнчен аталанма тата политика тĕлĕшĕнчен организациленме пулăшасси—пирĕн чи кирлĕ тата тĕп задача», тенĕ (Соч., 4 том., 344 стр.).

В. И. Ленин хăйĕн «С чего начать?» ятлă паллă статьинчех марксистла партие тумалли конкретнăй плана палăртса хунă. Вăл Российăри царизм условийĕсенче марксистла парти тăвас ĕçе пĕтĕм Российăри вăрттăн тухса тăракан политикăллă хаçата организацилениччен пуçламаллине, хаçат коллективлă пропагандист тата коллективлă агитатор кăна мар, çавăн пекех тата коллективлă организатор та пулнине кăтартнă.

Çавăн пек хаçат Ленин организациленĕ «Искра» хаçат пулнă, унăн пĕрремĕш номерĕ 1900 çулхи декабрьте тухнă. «Искра» хаçата организацилени тата çирĕплетсе пыни Ленин Российăра марксистла парти тăвассишĕн кĕрешнин тĕп пайĕ пулнă. Ку тĕлĕшпе И. В. Сталин юлташ организациленĕ «Брдзола» («Кĕрешӳ») хаçат та пысăк вырăн йышăннă, вăл ленинла «Искра» хыççăн Российăри чи лайăх марксистла хаçат шутланнă. Ленинла «Искра» тата сталинла «Брдзола» хаçатсем Российăра революциллĕ марксизм ялавне—пролетариллĕ çĕнĕ типлă партишĕн кĕрешмелли ялава çӳле çĕкленĕ.

IV.

Марксистла партин идеологиллĕ никĕсĕсене хӳтĕлесе хăварас тата малалла аталантарас ĕçре И. В. Сталин юлташ питĕ пысăк вырăн йышăннă. Сталин юлташăн «Коротко о партийных разногласиях» тата «Ответ «Социал-Демократу» ятлă чаплă произведенийĕсем марксизм-ленинизма аталантарас ĕçре çав тери пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Сталин юлташăн çав гениллĕ ĕçĕсем хăйсен çивĕччĕшĕпе меньшевиксене тата пĕтĕм тĕнчери оппортунизма хытă пырса çапаççĕ. Вĕсенче рабочисен юхăмĕнчи ăнланулăхпа стихийлăх ыйтăвне теори енчен тарăннăн çутатса панă, вĕсенче оппортунизма вĕçне çитиччченех критикленĕ.

Сталин юлташ 1905 çулăн пуçламăшĕнче çырнă тата çав çулхи май уйăхĕнче вăрттăн пичетлесе кăларнă «Коротко о партийных разногласиях» ятлă чаплă ĕç хăйĕн идейăллă содержанийĕпе тӳрремĕнех Ленинăн «Мĕн тумалла?» ятлă историллĕ кĕнекипе çыхăнса тăрать. Унта И. В. Сталин марксистла партин идеологиллĕ никĕсĕсене хӳтĕлет тата малалла аталантарать. Сталин юлташ рабочисен юхăмĕшĕн социализмлă ăс-тăн теорипе практика хушшинче пĕрлĕх тума, социализмлă вĕрентĕве рабочисен юхăмĕпе çыхăнтарма кирлине палăртать. Сталин юлташ рабочисен юхăмне караппа, социализма компăспа сăнарласа танлаштарса кăтартать. Усă курмасăр тытакан компас тутăхса кайма çеç пултарать,—ун чухне ăна борт хыçне кăларса пăрахмалла пулĕччĕ. Рабочисен юхăмĕ социализмсăр—компассăр карап евĕрлех, вăл тепĕр çыран патне çапăнса те çитме пултарать, анчах та компас пулас пулсан, вăл çыран патне нумай хăвăртрах çитĕччĕ тата хăрушлăхсем [illegible] тĕл пулнă пулĕччĕ. Çавăнпа та рабочисен юхăмне социализмпа пĕрлештерни кирлĕ.

Социализмлă идеологин аслă пĕлтерĕшне кăтартса парса, Сталин юлташ унпа пĕрлех идейăсем экономикăллă аталануран килнине манмалла марри çинчен асăрхаттарать.

Сталин юлташ марксистла партин рабочисен юхăмĕнчи вырăнĕпе пĕлтерĕшне уйрăмах палăртса хăварнă тата оппортунистсен стихийлăх теорине пĕтĕрсе тăкмалла критикленĕ. «...Рабочисен юхăмне социализмпа пĕрлештермелле,—тесе çырнă Сталин юлташ,—практикăллă ĕçпе теориллĕ шухăш пĕр çĕре пĕрлешмелле, çавăнпа вара рабочисен стихийлă юхăмне социал-демократиллĕ характер памалла...» (Соч., 1 том, 105 стр.).

Ленинпа Сталин большевиксен партине рабочи класăн чи идейăллă тата пиçĕхнĕ партийĕ туса вĕрентсе ӳстернĕ, ăна пĕтĕм тĕнчипе историллĕ çĕнтерӳсем патне илсе çитернĕ. Парти социализмшăн кĕрешес ĕçĕн пур тапхăрĕсенче те çĕнтерӳ тунă, мĕншĕн тесен вăл революциллĕ марксизм ялавне шанчăклăн тата пĕр пăрканланмасăр малалла илсе пынă, оппортунизма, национализма хирĕç, буржуаллă идеологи кирек мĕнле майпа палăрнине те хирĕç килĕшсе тăмасăр кĕрешнĕ.

Ленинпа Сталин ӳстерсе çитĕнтернĕ большевиксен партийĕ хăйĕн пĕтĕм мухтавлă историйĕ тăршшĕпех рабочи класăн тата мĕнпур ĕçсыннисен идейăллă-политикăллă шайне ӳстерессишĕн кĕрешнĕ тата халĕ те пĕрмаях кĕрешет. Хальхи вăхăтра, социализмлă общество туса çитернĕ тата социализмран майĕпен коммунизма куçнă тапхăрта большевиксен партийĕн воспитани парас ĕçĕ уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Ленин—Сталин партийĕ çынсен ăс-тăнĕнчи капитализм юлашкисене хирĕç, идейăсăрлăха тата политикăллă пурнăçран пăрăннине хирĕç, Хĕвеланăçĕнче çĕрсе пăнтăхнă буржуаллă культура умĕнче пуç тайнине хирĕç, буржуаллă национализм тĕрлĕ майсемпе палăрнине хирĕç, вăрă-хурахла Америка империализмĕн тата унăн сылтăм социалистла агентурин идеологиллĕ хĕçпăшалĕ пулса тăракан космополитизма хирĕç татăклăн кĕрешет.

Ленин—Сталин партийĕ чи малта пыракан тата вĕçне çитиччченех научнăй идеологи пулса тăракан марксистла-ленинла идеологи тасалăхне çивĕччĕн сыхласа тăрать тата идеологиллĕ тĕрлĕ пăсăксене хирĕç, совет наукипе культурине буржуаллă идейăсем туртса кĕртме хăтланнине хирĕç пĕр килĕшсе тăмасăр кĕрешет. Парти, совет, хуçалăх, комсомол кадрĕсен идейăллă-теориллĕ шайне ӳстерессишĕн, мĕнпур ĕçсыннисене коммунистла воспитани парассишĕн пирĕн парти ывăнма пĕлмесĕр кĕрешет.

Большевиксен партийĕн идеологиллĕ ĕçне малалла вăйлатса пырас ĕçре И. В. Сталинăн «Марксизм тата чĕлхе вĕрентĕвĕн ыйтăвĕсем» ятлă гениллĕ ĕçĕ питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çав произведенире Сталин юлташ, марксизм-ленинизм чĕлхе çинчен вĕрентнине туса хатĕрленипе пĕрлех, марксизм-ленинизм теорийĕн чылай паха положенийĕсене малалла творчествăллă аталантарнă.

* * *

Ленинăн «Мĕн тумалла?» кĕнеки пĕтĕм тĕнчипе питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл мĕнпур çĕршывсенчи рабочи класа научнăй социализм идеологийĕпе хĕçпăшаллантарать, оппортунистсен буржуаллă идеологине тăрă шыв çине кăларма пулăшать.

Коммунистсемпе рабочисен тăванла партийĕсем хăйсен мĕнпур ĕçне марксистла-ленинла теори тăрăх, большевиксен партийĕн пуян опычĕ çине таянса туса пыраççĕ. Тăванла компартисем марксизм-ленинизм принципĕсен никĕсĕсем çинче тăрса çирĕпленни вĕсем рабочи класс пĕрлĕхĕшĕн, миршĕн, демократишĕн тата социализмшăн кĕрешме мĕнпур демократиллĕ вăйсене пĕтĕçтерессишĕн, вăрçă пуçаракансене тата Америка империализмĕн тарçисем пулса тăракан сылтăм социалистсене хирĕç кĕрешсе çĕнтерӳ тумалли тĕп услови пулса тăрать.

Югославире сутăнчăк Тито ушкăнне, Венгрире Ласло Райк, Болгарире Трайчо Костов, Польшăра Спыхальский, Албанире Коча Дзодзе, Чехословакире Сланский, Швермова, Шлинг, Клементис тата вĕсен ытти бандисене тăрă шыв çине кăларнă хыççăн мĕнпур çĕршывсенчи коммунистсемпе рабочисен партийĕсем революциллĕ сисĕмлĕхе ӳстерессишĕн кĕрешессине вăйлатрĕç. Коммунистсемпе рабочисен партийĕсем коммунистсен политикăлла пĕлĕвне ӳстерес, вĕсене пролетариллĕ интернационализм идейисене тĕрĕс тытса пыма, марксизм-ленинизм принципĕсенчен кирек мĕнле пăрăннине те хирĕç пĕр килĕшмесĕр кĕрешме вĕрентес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса пыраççĕ.

Совет халăхĕ коммунизм строительствинче пĕтĕм тĕнчипе историллĕ çĕнтерӳсем туни, Европăри халăх демократи çĕршывĕсенчи, Китай Халăх Республикинчи тата Демократиллĕ Германи Республикинчи ĕçсыннисем çĕнĕ пурнăç тăвас ĕçре мухтавлă çитĕнӳсем туни, колонисемпе пăхăнса тăракан çĕршывсенче наци тĕлĕшĕнчен ирĕке тухассишĕн пыракан юхăм нихçанхинчен те вăйлăрах çĕкленни, капитализмлă çĕршывсенче рабочисен юхăмĕ ӳссе пыни,—çак историллĕ событисем пĕтĕмпех марксизм-ленинизмăн пурнăçра çирĕпленсе пыракан аслă вăйне питех те уççăн кăтартса параççĕ.

И. РЯБЦЕВ,
Истори наукисен кандидачĕ.

1951—1952 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана «Чăвашвăрман» трест енĕпе 1952 çулхи мартăн 10-мĕшĕ тĕлне тултарнине кăтартакан сводка (процентпа)

Районсем	Касса хатĕрлевĕ	Çул хĕррине илсе тухни	Турттарса кăларни
Улатăр	86,3	88,0	69,2
Элĕк	79,8	82,2	57,5
Вăрнар	91,4	76,3	94,6
Йĕпреç	95,6	89,2	56,4
Ишлей	62,4	—	37,2
Калинино	92,3	73,7	96,2
Канаш	89,2	86,4	83,9
Комсомольски	101,5	103,4	101,0
Куславкка	89,4	99,4	87,5
Красноармейски	69,3	34,4	64,7
Хĕрлĕ Чутай	95,9	67,7	—
Кувакино	72,6	86,1	48,4
Сĕнтĕрвăрри	76,5	72,6	47,9
Муркаш	108,0	110,2	—
Октябрьски	65,0	89,2	76,4
Первомайски	89,0	76,6	86,9
Пăрачкав	100,1	102,7	102,1
Советски	68,1	—	73,6
Сĕнтĕр	100,7	41,1	86,4
Вăрмар	67,8	95,1	38,1
Çĕрпӳ	71,9	85,1	66,9
Шупашкар	94,5	99,8	50,0
Чкаловски	103,3	100,0	94,4
Чурачăк	84,6	79,2	51,2
Шăмăршă	79,8	69,1	76,1
Шăхасан	85,7	92,5	56,3
Çĕмĕрле	115,1	102,3	100,0
Етĕрне	79,1	106,4	62,7
Елчĕк	49,7	81,9	64,3
Тăвай	67,6	100,0	67,0

Сăмах параççĕ, ĕçне тумаççĕ

Тăвай районĕ вăрман хатĕрлемелли плана çултан-çул тултараймасть, ку сезонта та вăл юлса пырать. 1951 çулхи октябрьпе ноябрь уйăхĕсенче районти колхозниксем вăрманта сахал ĕçлерĕç, ун хыççăн та паллă улшăнусемех пулмарĕç. Çавăнпа район йывăç касса хатĕрлемелли плана 66 процент, турттарса кăлармалли плана 58 процент çеç тултарнă.

Районти колхозсен çак кунсенче тăхăр пин кубометра яхăн йывăç касса хатĕрлемелле тата турттарса кăлармалла. Кĕркуннепе хĕллехи сезон планне ăнăçлă тултарас тесен, куллен икçĕр çын çуран, 260 çын лавпа ĕçлемелле. Мартăн 5-мĕшĕ тĕлне вара 88 çын çуран, 186 çын лавпа ĕçленĕ. Районти партипе совет организацийĕсем колхозниксене вăрман хатĕрлевне массăллăн хутшăнтарма, вĕсене панă сăмаха чыслă пурнăçлама мобилизацилес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ ял Совет исполкомĕсемпе колхоз председателĕсен тата пуçламăш парторганизаци секретарĕсен канашлăвĕсене час-часах ирттереççĕ, решенисем сахал мар йышăнаççĕ. Анчах вĕсем йышăннă решенисене пурнăçа кĕртессишĕн кирлĕ пек кĕрешмеççĕ.

Хрущев ячĕпе тăракан колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана сакăр процент, турттарса кăлармалли плана 28 процент çеç тултарнă. «Сталь», «25 лет Октября», «Социализм» колхозсем тата Молотов ячĕпе тăракан колхоз сезон планне çуррине те тултарман.

Район вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе юлса пынин тепĕр сăлтавĕ вăл—чылай колхозсенче вăрманта ĕçлекенсем час-часах улшăнса тăни пулать. Колхозниксем нумайăшĕ вăрмана виç-тăватă кун ĕçлеме çеç пыраççĕ, çул çинче вара тăват-пилĕкшер кун ирттереççĕ. Тăвайпа Шăмăршă хушшинчи çул çинче вăрман хатĕрлеме каякан е таврăнакан вунăшар колхозника курма пулать.

Районта малта пыракан колхозсем сахал мар. «Искра Ильича» колхоз членĕсем йывăç хатĕрлемелли плана срокчен тултарчĕç. Колхоз председателĕ Архипов юлташпа пуçламăш парторганизаци секретарĕ Чичканов юлташ колхозниксене хăйсем ертсе пычĕç. Чичканов юлташ плана тултариччен вăрмантан тухмасăр йывăç турттарчĕ. Киров ячĕпе, Горкин ячĕпе тăракан, «Горьковская коммуна» колхозсем Тăван çĕршыв валли йывăç планран ирттерсе хатĕрлеççĕ. Ку колхозсем йывăç хатĕрлеме ятарласа бригадăсем тунă, бригадăсене ертсе пыма опытлă çынсене уйăрнă. Кашни бригадăра агитаторсем пур. Вĕсем стахановецсен опытне сараççĕ, социализмлă ăмăртăва пуçарса ертсе пыраççĕ. Райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ çак малта пыракан колхозсен опытне пĕтĕçтермеççĕ.

Шăмăршă вăрманпромхозĕн мастерĕсемпе технорукĕсем колхозниксене ĕçе тĕрĕс организацилеме пулăшмаççĕ, ĕç укçи тӳлемелли çĕнĕ йĕркепе, кадрти рабочисен паха опычĕпе паллаштармаççĕ. Вăрманпромхоз директорĕ Кайсаров юлташ колхозниксене тухăçлă ĕçлеме лайăх майсем туса пама, мастерсен ответлăхне ӳстерме тăрăшмасть.

Шăмăршă вăрманпромхозĕ кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра хатĕрлекен йывăçа пĕтĕмĕшпех çуркуннехи шыв тăрăх ăсатмалла. Вăрманпромхоз йывăç шыв тăрăх ăсатмалли задание ăнăçлă пурнăçласси Тăвай районĕнчи колхозсем вăрман хатĕрлемелли сезон планне вăхăтра тултарнинчен сахал мар килет. Сезон вĕçленесси, çуна çулĕ пăсăласси инçе юлмарĕ. Плана тултарман колхозсен хĕллехи кашни кунпа тулли усă курма, хăйсен Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçне чыслă пурнăçлама татăклă мерăсем йышăнас пулать.

И. СМИРНОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парторганизацисен ответлăхне ÿстермелле

ВКП(б) Первомайски райкомĕн черетлĕ ...умĕнче, парти обкомĕн IX-мĕш пленумĕн йышăннă решенийĕсем çинчен сÿтсе ...чухне, районти колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен ĕçне паянхи ...йĕсен çÿлĕшне хăпартас ыйту çинчен тухса тăчĕ.

...йонти колхозсенче пурниче те пуçламăш парторганизацисем пур, 10 колхозра МТС-ра партбюросем тунă. Ялти ...унистсен пысăк пайĕ колхоз производствинче ĕçлет. Анчах чылай партоганизацисем колхозсене ертсе пырас пысăк çитменлĕхсене пĕтермен-ха. ...м колхоз правленийĕн ĕçне тĕрĕслемелли правăпа кирлĕ пек усă курмаççĕ, ку тĕлĕшпе хăшпĕр чухне йăнăш...те тăваççĕ. Уйрăм парторганизацисем ...оз строительствинчи пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса парас ĕçре хăйсен ...рулăхне сахал палăртаççĕ.

...ленумра тухса калакансем Ворошилов ...о тăракан, «Новая сила», Молотов ...е тăракан колхозсенчи пуçламăш ...торганизацисем артель хуçалăхне тĕ...ютес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине ...ртса пачĕç. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри руководительсем, вăл шутра пуçламăш парторганизаци секретарĕ ...ков юлташ хăй те, ялхуçалăх артель ...авне пăсас çул çине тăнă. Нумай ...ламăш парторганизацисем общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн ...лăхне лайăхлатас, выльăхсенчен илетупăша хăпартас ыйтусем çине çи...ĕксĕр пăхаççĕ. Фермăсенче ĕçлекен коммунистсен йышĕ ытла та пĕчĕккĕ, кадрсене çирĕплетес тата воспитани парас ĕçе тивĕçлипе организацилемен.

Парторганизацисен ĕçĕнчи çитменлĕхсем, чи малтан, критикăпа самокритикăна сарса пыман пирки пулаççĕ. Ку вăл пленумра та палăрчĕ. Хрущев ячĕпе, Ленин ячĕпе тăракан колхозсенчи партбюро секретарĕсем Пазуновпа Ильин юлташсем, «Сталинград» колхозри парторганизаци секретарĕ Узюков юлташ пĕрлешнĕ колхозсен хуçалăхĕнчи ÿсĕмсем çинчен нумайрах калама тăрăшрĕç, анчах парторганизаци йышăннă пысăк решенисем мĕншĕн пурнăçа кĕмесĕр юлни çинчен пĕр сăмах та каламарĕç.

Районта çуракине хатĕрленес ĕç начар пырать. Пысăк резервсем пур пулин те, хăшпĕр колхозсенче вăрлăх хатĕрлесе çитермен, техникăллă культурăсемпе курăк вăрлăхĕсем çитмеççĕ. Чылай çĕрте машинăсемпе ĕç хатĕрĕсене юсама тытăнман, удобренисем хатĕрлес тата турттарас ĕç вăраха тăсăлать. Райсовет исполкомĕн ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ Андреев юлташ çав çитменлĕхсен тĕп сăлтавĕсене уçса палăртас, ялхуçалăх специалисчĕсен ĕçне тишкерсе тухас вырăнне, пленумра иртнĕ çулхи ÿсĕмсем çинчен кăна чарăнса тăчĕ.

Партипе правительство пирĕн республикăри колхозсем умне кăларса тăратнă задачăсем ялхуçалăхри кадрсен квалификацине хăпартас ĕçе тĕпренех лайăхлатма хушаççĕ. Райсовет исполкомĕн ялхуçалăх пайĕн тимсĕрлĕхне пула, нумай колхозсенчи агротехникăпа зоотехника курсĕсем саланса кайнă. Райкомăн ялхуçалăх пайĕ колхозсен пурнăçне тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлмест, вĕсен ĕçне вăл тĕрлĕ сводкăсем тăрăх кăна хак парать. Наука çитĕнĕвĕсене, малта пыракансен опытне сарас ĕçе те тивĕçлипе йĕркелемен.

Коммунистсене идейăллă-политикăллă воспитани парас ĕç ыйтăвĕсем те пленумра паллă вырăн йышăнчĕç. Пуçламăш парторганизаци секретарĕсем райкома тата унăн пропагандăпа агитаци пайне политшкулсемпе кружок руководителĕсене сахал пулăшнăшăн, лекциллĕ пропагандăна çителĕксĕр сарнăшăн критикăларĕç.

ВКП(б) райкомĕ пуçламăш парторганизацисене ертсе пырассине тĕпренех çĕнетсе лайăхлатман-ха. Вăл пуçламăш организацисен шалти ĕçĕсене вăйлатассишĕн сахал тăрăшать.

Райком вырăнти кадрсене политикăллă ĕçе туса пыма çителĕксĕр вĕрентет, пуçламăш парторганизаци секретарĕсене инструктаж парасси тивĕçлĕ вырăнта мар, семинарсем хăшпĕр чухне вăхăтра иртмеççĕ. Райкомăн парти, профсоюз тата комсомол организацийĕсен пайĕ парторганизацисен ĕçри опытне пĕтĕçтерес ыйтусем çине тимлĕ пăхмасть.

Пленум, ВКП(б) Чăваш обкомĕн пленумĕн решенийĕсене ырласа, вĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тума палăртрĕ.

Н. ВОЛКОВ,
(Хамăр корр.).

Райкомсен пленумĕсемпе парти активĕн пухăвĕсенче

Парти активĕн районти пухăвĕ пулса ...рĕ. Унта ВКП(б) райком секретарĕ Иванов юлташ парти обкомĕн IX-мĕш ...енумĕн ĕçĕсем çинчен доклад туса ...чĕ.

Тăвай районĕ ялхуçалăх енĕпе юлса ...рать. Тĕштырă тата ытти культурăсен хăçлăхĕ пысăк мар, выльăхсенчен илен тупăша ÿстерес ĕç те çителĕксĕр. ...рăм колхозсем ялхуçалăх енĕпе юлса ...ни, вĕсем организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕпленсе çитменни çав колхозсенчи парторганизацисем партиллĕ-организациллĕ тата политикăллă ĕçсене япăххине, парти райкомĕ ялхуçалăхне ...лалла аталантармалли тĕп ыйтусем ...не çителĕклĕ пăхманнинчен килет.

Колхозсенчи нумай парторганизацисем ...ансăр ĕçлеççĕ. Вĕсенче парти пухăвĕ...не идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çÿлĕ ...усăмра ирттермеççĕ, хуçалăхри чи кирлĕ ыйтусене сÿтсе явмаççĕ. Производствăра малта пыракансене парти ретне ...лесси начар, çавăнпа уйрăм парторганизацисен йышĕ пысăк мар. 46 çынăн ...арти кандидатĕнче тăмалли стажĕ тахçанах иртсе кайнă. Çамрăк коммунистсене воспитани парассишĕн райком сахал ...рăшать.

Хăшпĕр колхозсенчи парторганизацисем марксистла-ленинла вĕренĕве çителĕксĕр ертсе пыраççĕ. «Социализм», Молотов ячĕпе тăракан, Киров ячĕпе тăракан колхозсенчи кружоксемпе политшкулсен занятийĕсем план тăрăх иртмеççĕ. Чылай коммунистсем кружоксен занятийĕсене сиктерсе çÿреççĕ, вĕренÿре ...лкĕрсе пымаççĕ.

Политикăллă агитаци халăхри вăхăтри задачăсене, ĕçсыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтермест. Чылай агитколлективсем куллен ĕçлемеççĕ, хăйсен ĕçĕсене хуçалăхпа политикăллă задачăсемпе çыхăнтармаççĕ.

Районта халăха кино кăтартас, ĕçсыннисем хушшинче хаçат-журнал сарас тата колхозсене радиофикацилес ĕçсем те çителĕксĕр пулса пыраççĕ.

— ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ, колхозсенчи тата МТС-ри пуçламăш парторганизацисем кăçалхи вăйлă тырпулшăн çителĕклĕ кĕрешÿ пуçарманха,—тет «25 лет Октября» колхозри парторганизаци секретарĕ Новикова юлташ.—Сортлă вăрлăх хатĕрлесси, уя тислĕк, торф кăларас ĕçсем юлса пыраççĕ. Колхозниксем хушшинче агрозоотехникăна вĕренесси, ялхуçалăх новаторĕсен паха опытне сарасси те çителĕксĕр пулса пыраççĕ. МТС колхозсене çуракине хатĕрленес ĕçре пулăшмасть.

Районти колхозсенче 618 комсомолец. Чылайăшĕ вĕсенчен уй-хир бригадисемпе выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлеççĕ. Анчах ВКП(б) райкомĕ пуçламăш парторганизацисене комсомола ертсе пырас ĕçре тивĕçлĕ кăтартусем памасть. Парти райкомĕ ВЛКСМ райкомне те кирлĕ пек пулăшмасть. Райком секретарĕсем ВЛКСМ райкомĕн пленумĕсене чĕнсен те пымаççĕ.

Пуху колхозсенчи парторганизацисен ĕçĕсене лайăхлатас тата районти строительство ĕçĕсене вăйлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

* * *

Партин Елчĕк райкомĕн пленумĕ колхозсенчи парторганизацисен ĕçне лайăхлатмалли майсем çинчен ВКП(б) Чăваш обкомĕн IX-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене уйрăмах тĕплĕн сÿтсе яврĕ.

Пленум çакна палăртрĕ: парти райкомĕ лайăх ĕçлекен парторганизацисен опытне тĕпчесе вĕренес тата сарас, колхозсенчи парторганизацисене куллен çирĕплетес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Райком секретарĕсем, бюро членĕсем тата ытти ответлă работниксем пуçламăш парторганизацисенче кĕске вăхăтлăха кăна пулаççĕ, парторганизаци секретарĕсене партиллĕ-политикăллă тата организациллĕ ĕçсене лайăхлатма кирлĕ чухлĕ пулăшмаççĕ. Райком парторганизаци секретарĕсемпе семинарсем сахал ирттерет.

«Малалла» колхозри пуçламăш парторганизаци правлени ĕçне тĕрĕслесе пымасть, коммунистсене партпоручениесем парса, вĕсене парти ĕçне активлă хутшăнтарма тăрăшмасть. Парти пухăвĕсем сÿрĕккĕн, критикăпа самокритикăсăр иртеççĕ.

Парти райкомĕ колхозсенчи коммунистсене тата ертсе пыракан кадрсене марксистла-ленинла воспитани парас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Ялсенчи парторганизацисенче политикăллă-массăллă ĕçе начар йĕркеленĕ. Районти ертсе пыракан работниксем массăсем хушшинче политикăллă докладсем тăтăшах туса памаççĕ.

Пленум районти парторганизацие партиллĕ-политикăллă тата партиллĕ-организациллĕ ĕçсене вăйлатас тĕлĕшпе конкретлă решени йышăнчĕ.

* * *

ВКП(б) Советски райкомĕн пленумĕнче парти обкомĕн IX-мĕш пленумĕн ĕçĕсем çинчен ВКП(б) райком секретарĕ Е. Мидаков юлташ доклад туса пачĕ.

Райком хуçалăхпа политикăллă задачăсене пурнăçланă чухне колхозсенчи парторганизацисем çинчен час-часах манса каять.

Парти райкомĕ, çавăн пекех пуçламăш парторганизацисем коммунистсен авангардлă рольне çителĕксĕр ÿстерсе пыраççĕ Коммунистсем штатлă вырăнсенче ытларах ĕçлеççĕ.

— Ленин ячĕпе тăракан колхозра 40 коммунист ытла. Çапах та вĕсенчен чылайăшĕ производствăра малта пынине кăтартмасть, вĕсем хушшинче дисциплина та çителĕксĕр. Ахальтен мар ĕнтĕ, колхоз чылай ĕçсемпе юлса пырать, — тет райком членĕ А. Мысин юлташ.

Андреев ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци секретарĕ Г. Шепелев юлташ МТС колхозсене выльăх-чĕрлĕх фермисене механизацилес ĕçре сахал пулăшнине палăртать. «Эпир выльăхсене шăварас ĕçе механизацилеме палăртрăмăр. Анчах пире пулăшма темиçе хут ыйтнă пулин те, МТС-ри работниксем пирĕн колхоза пырса та курмарĕç»,—тет вăл.

Киров ячĕпе тăракан колхозри партбюро секретарĕ В. Михайлов юлташ çапла каларĕ: «Районти ялхуçалăх пайĕн агрономĕсем колхозсене çĕрĕç культурине ÿстерсе пыма сахал пулăшаççĕ. Пирĕн колхозра агротехникăна вĕренмелли курс уçма палăртнăччĕ. Вĕренме çÿрекенсен списокне те тунăччĕ. Анчах ялхуçалăх пайĕн агрономĕ Крупова юлташ çак ĕç çине çиелтен пăхрĕ, курсра ĕçлемерĕ. Çакăн пирки «Чăваш Коммуни» хаçатра çырнă хыççăн, ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ В. Шумилов юлташ редакцие Круповăна ĕçрен хăтарнă, тесе пĕлтерчĕ. Анчах Крупова çав вырăнтах ĕçлет, колхозсенче пулмасть».

— Районта ялпа колхоз строительствин пайĕ пур. Çав пай колхозсене мĕнле пулăшса пырать-ха? Эпир ун пулăшăвне курмастпăр. Иртнĕ çулта эпир саман кирпĕчсем туса вите лартма шутларăмăр. Пирĕн пата килсе, тăм тĕрĕслеме илсе кайрĕç. Анчах результатне пĕлтермерĕç. Ялпа колхоз строительствин пайĕ пĕр колхоза та вырăнти строительство материалĕсенчен выльăх вити тума пулăшман,—тет «Авангард» колхоз председателĕ Г. Михайлов юлташ.

Пленум обком пленумĕн решенийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе решени йышăнчĕ.

Парти ретне илес ĕçе ертсе пырас пулать

ВКП(б) Улатăр хула комитечĕн пленумĕ хулари парторганизаци ретне ÿстерессипе тата çамрăк коммунистсене воспитани парасси çинчен сÿтсе яврĕ.

Хулари парторганизацире малта пыракан совет çыннисене партие илес ĕçе чылай лайăхлатнă. Парти ретне илнисен шутĕнче стахановецсем, производствăри новаторсем, совет интеллигенцийĕн чи лайăх представителĕсем: пăравус юсакан заводри паллă токарь М. Д. Николаева юлташ, атă-пушмак фабрикинчи закройщица М. А. Дудрова юлташ, пăравус машинисчĕ А. О. Тихонова юлташ, РСФСР тата Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учительницисем В. Д. Распопова М. И. Галкина юлташсем тата ытти те.

Анчах Улатăр хулинчи хăшпĕр парторганизацисем партие уйрăмăн суйласа илмелли йĕркене пăсаççĕ, партие кĕме ыйтакансен ĕçĕпе тата пурнăçĕпе тĕплĕ паллашмаççĕ.

Депори, махорка фабрикинчи тата ытти парторганизацисем малта пыракан рабочисене партие илессине вăйсăрлатнă. Хулари промкомбинатри, водосветри, кирпĕч заводĕнчи парторганизацисем партире тăман активпа тачă çыхăнса ĕçлемеççĕ.

Чылай парторганизацисенче çамрăк коммунистсене воспитани парасси начар. Çавăнпа та ĕнтĕ мĕнпур кандидатсенчен 38 процентĕн кандидат стажĕ тахçанах иртсе кайнă. Пуринчен ытла ун пек кандидатсем пăравус юсакан заводра нумай.

Хăшпĕр парторганизацисенче, сăмахран, торф предприятийĕнче, государство банкĕн хулари уйрăмĕнче, кирпĕч заводĕнче парти пухăвĕсене сайра хутра çеç ирттереççĕ, парти пурнăçĕн кирлĕ ыйтăвĕсене çителĕксĕр сÿтсе яваççĕ. Çамрăк коммунистсем парти пухăвĕсенче тухса калаçмаççĕ, пухусенче критикăпа самокритикăна анлă сарса пымаççĕ.

Сÿтсе явнă ыйту тăрăх пленум решени йышăнчĕ.

Агитаторсен шкулĕсем

ВКП(б) Çĕрпÿ райкомĕн парткабинетĕнче тата «Дружба» колхозри парторганизацинче агитаторсен шкулĕсем ĕçлеме пуçларĕç. Парткабинетри агитаторсен шкулĕнче хулари предприятисемпе учрежденисенчи агитаторсем, колхозри агитаторсен шкулĕнче «Дружба», «Победа», Маленков ячĕпе тăракан тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенчи агитаторсем вĕренеççĕ.

Агитаторсем валли теори ыйтăвĕсем тăрăх лекцисем ирттерме, агитациллĕ ĕçĕн методикине вĕрентме партипе совет активне, учительсене, пысăк квалификациллĕ пропагандистсене хутшăнтарнă.

Малтанхи занятисенче агитаторсем идеологи ыйтăвĕсем тăрăх ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ йышăннă решенисем çинчен, ĕçсыннисене коммунистла воспитани парас тĕлĕшпе умра тăракан задачăсем çинчен лекцисем итлерĕç.

СТЕНА ХАÇАТ РЕДАКТОРĔСЕН КАНАШЛĂВĔ

СЕНТĔРВĂРРИ, ВКП(б) райкомĕ предприятисемпе учрежденисенчи тата колхозсенчи стена хаçат редакторĕсен канашлăвне ирттерчĕ.

Канашлăва пухăннисем стена хаçачĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен сÿтсе яврĕç.

Наукăпа тĕпчев экспедицийĕ

Вăрнар районĕнче виçĕ эрне хушши РСФСР Педагогика наукисен академийĕн экспедицийĕ ĕçлерĕ.

Çав вăхăтра вăл Упнерпе Вăрманкасри çичĕ çул вĕренмелли шкулсенче, Яхакассинчи пуçламăш шкулта, Уравăшпа Кĕçĕн Кипекри вăтам шкулсенче пулчĕ. Асăннă шкулсенче экспедици участникĕсем вырăс чĕлхипе литература, чăваш чĕлхипе литература, юрă тата ÿкерчĕк предмечĕсене мĕнле вĕрентнине сăнаса тĕпчерĕç. Районти учительсене теори енĕпе тата методикăлла пулăшу парас майпа лекцисем вуласа пачĕç.

Çав лекцисене вулас ĕçе педагогика наукисен кандидачĕсем А. А. Липаев, К. В. Мальцева, Е. И. Кореневский тата А. М. Валитов юлташсем активлă хутшăнчĕç.

Экспедици умĕнче тăнă пысăк задачăсенчен пĕри—пĕр класрах икĕ çул ларакансемпе вĕренÿре ĕлкĕрсе пыраймannисен хисепĕ юлашки çулсенче нумайланни мĕнрен килнине тĕпчесе пĕлесси пулса тăчĕ.

Паллах, çак пысăк задачăна пурнăçлама экспедици вăйĕпе кăна тума йывăр. Çавăнпа çак ĕçе вырăнти çутĕç пайĕн работникĕсене те анлă хутшăнтарнă.

Мартăн 2-мĕшĕнче экспедици участникĕсем районти шкулсенче ĕçлекен чĕлхепе литература преподавателĕсемпе, шкул директорĕсемпе тĕл пулса калаçрĕç. Экспедици начальникĕ педагогика наукисен кандидачĕ Кореневский юлташ тĕлпулура экспедицин тĕллевĕпе ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ.

Педагогика наукисен кандидачĕ Липаев юлташ вырăс литературине Вăрнар районĕнчи шкулсенче нагляднăй пособисемсĕр, произведенисене тĕплĕ тишкермесĕр вĕрентнине паллă турĕ. Çавăнпа пĕрлех 5—7-мĕш классенче литература урокĕсенче илемлĕ вуласси, словарьпе ĕçлесси начар вырăнта тăнине асăрхаттарчĕ.

Пуçламăш шкулсенче вырăс чĕлхине вĕрентни çинчен педагогика наукисен кандидачĕ Валитов юлташ каласа пачĕ.

Кореневскипе Липаев юлташсем Шупашкар хулинчи шкулсенчи литература преподавателĕсемпе канашлу ирттерчĕç, вĕсене теорипе методика ыйтăвĕсем тăрăх пулăшрĕç.

Наукăпа тĕпчев экспедицийĕ учительсене вăхăтра пулăшу парас майпа куçса çÿрекен библиотека йĕркелет.

Экспедицин уйрăм членĕсем республикăна апрель уйăхĕнче каллех килеççĕ. Ун чухне вĕсем чăваш шкулĕсенче вĕренмелли кĕнекесемпе программăсене тĕплĕн тишкерсе тухаççĕ.

Çак экспедици Вăрнар районĕнчи шкулсенче икĕ çул хушши пулать. Учительсене яланах пулăшу парса, вĕренÿ ĕçĕн пахалăхне лайăхлатма пулăшать.

С. ЮШКОВ,
Наукăпа тĕпчев экспедицин членĕ, РСФСР Педагогика наукисен академийĕн аспиранчĕ.

ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн сессийĕ йышăннă Законсене чĕререн ырлаççĕ

Республикăри ĕçсыннисем СССР Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕ йышăннă законсене пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Çак кунсенче предприятисемпе учрежденисенче, колхозсенче агитаторсем сесси материалĕсене вуласа пара ççĕ, вĕсем тăрăх калаçусем ирттереççĕ.

Шупашкарти Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводра кашни цехра, участокра сесси материалĕсем тăрăх рабочисем хушшинче калаçусем ирттереççĕ. Рабочисемпе работницăсем Верховнăй Совет Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕ çинчен йышăннă Закона чĕререн ырлаççĕ.

— Пирĕн Тăван çĕршыв мирлĕ—çĕршыв. Эпир ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн, вĕсене телейлĕ те тулăх пурăнакан тăвассишĕн кĕрешетпĕр. Пирĕн çĕршывра мирлĕ строительство ĕçĕсем пыраççĕ. Пирĕн государство бюджечĕ вăл—мир бюджечĕ пулса тăрать. Эпир бюджета пурнăçлассишĕн, коммунизмăн аслă стройкисен законĕсене срокчен пурнăçлассишĕн ырми-канми ĕçлĕпĕр,—тет заводри паллă стахановка-прессовщица Лида Пегасова. Иртнĕ уйăхри задание вăл 200 процент ытла пурнăçланă. Халĕ те çавăн пекех тăрăшса ĕçлет. Продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн, чĕртавара перекетлессишĕн кĕрешет.

— Эпир хамăр Тăван çĕршывăн вăй-хăватне тĕреклетсех пыратпăр,—теççĕ сборочнăй цехри рабочисемпе работницăсем.

Цех коллективĕ иртнĕ уйăхри производство планне ирттерсе тултарнă. Халĕ пĕрремĕш квартал планне срокчен тултарассишĕн кĕрешет. Тимина, Павлова, Митрофанова юлташсем ертсе пыракан бригадăсем кулленхи задание ялан ирттерсе тултараççĕ.

СССР Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕн материалĕсене ытти цехсенче те пĕрлĕшсе вуласа тухнă, калаçусем ирттернĕ. Сесси материалĕсене рабочисем чĕререн кăмăлласа ырлаççĕ.

Хастарлăрах ĕçлеме пулаççĕ

Шупашкарти макарон фабрики 1951 çулхи IV-мĕш кварталта тунă çитĕнÿсемшĕн Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулнă. Фабрика коллективĕ январьпе февраль уйăхĕсенчи производство планне те срокчен тата ирттерсе тултарнă.

СССР Верховнăй Совечĕ йышăннă законсемпе хавхаланса, рабочисем, инженерсемпе техниксем ĕç тухăçлăхне ÿстерсех пыраççĕ, пĕрремĕш сортлă продукци туса кăлараççĕ.

Фабрикăра стахановецсемпе стахановкăсем сахал мар. М. Борисова, М. Тарасова прессовщицăсем, Л. Швед, Ф. Александрова упаковщиксем, А. Ерастов вальцовщик тата ыттисем те кулленхи нормăна 115—150 процент таран тултарса пыраççĕ.

Агафия Яковлева—фабрикăри паллă стахановкăсенчен пĕри. Вăл—Шупашкар хула Совечĕн депутачĕ. Кулленхи заданино 150—165 процент тултарса пырасси уйăх йăлине кĕнĕ. ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджечĕ çинчен йышăннă Законпа хавхаланса, Яковлева юлташ çак кунсенче ĕç тухăçлăхне тата 10—12 процент чухлĕ ÿстерчĕ.

— ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджечĕ пирĕн çĕршыв çирĕп миршĕн тăнине тепĕр хут çирĕплетсе парать. Эпир халăх телейĕшĕн, çĕршыв вăйхăвачĕшĕн ĕçлетпĕр. Малашне тата хастарлăрах ĕçлеме пулатăп,—тет стахановка.

Упаковочнăй цеха аслăлатаççĕ. Ку вăл рабочисен ĕç тухăçлăхне ÿстерме, вĕсен ĕçне çăмăллатма пулăшать. Çак кунсенче фабрикăна макарон туса кăларакан ГМП-1 автоматлă машина илсе килнĕ, халĕ ăна вырнаçтарса лартаççĕ.

— Ĕçлеме пур условисем те çителĕклĕ. Хĕрлĕ ялава хамăр алăрах хăварассишĕн, чи лайăх продукци туса кăларассишĕн ырми-канми ĕçлĕпĕр,—теççĕ рабочисем.

А. ЖИРНОВ.

Ĕçри пысăк çĕкленÿ

ÇĔМĔРЛЕ, мартăн 13-мĕшĕ («Чăваш Коммуни» корр.). Сĕтел-пукан комбинатĕнчи рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ йышăннă законсене чÿнтап савăнса кĕтсе илчĕç.

Пиллĕкмĕш цехри агитатор И. Сорокин калаçу ирттернĕ чухне В. Спирин стахановец çапла каларĕ:

— Партипе правительство тата аслă çулпуçăмăр Сталин юлташ пирĕн Тăван çĕршыв хуçалăхĕпе культурине ÿстерессишĕн куллен тăрăшаççĕ. Кун çинчен СССР Верховнăй Совет сессийĕ йышăннă законсем те лайăх çирĕплетсе параççĕ. Сесси йышăннă Государство бюджечĕ — мирлĕ хуçалăхпа строительство бюджечĕ, вăл пĕтĕм халăх шухăш-кăмăлĕпе килĕшсе тăрать.

Çитес çулсенче комбинатăн икĕ хутлă вунă чул çурт туса лартмалла. Çĕмĕрлери ытти предприятисенче те çуртсем нумай туса лартаççĕ. Пирĕн социализмлă ăмăртăва тата та ытларах вăйлатмалла, чи паха продукци туса кăлармалла.

Комбинатри М. Хатрохов, В. Спирин, А. Кабанин, Н. Агашина, Е. Крымова, Н. Климов, Г. Генеральшин стахановецсем кулленхи производство заданине 200—250 процент таран тултарса пыраççĕ. Рабочисем халĕ çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ, татах та хастарлăрах ĕçлеме пулаççĕ.

Сĕнтĕр районĕнче сысна ĕрчетес ĕç мĕншĕн юлса пырать

Юлашки виçĕ çул хушшинче Сĕнтĕр районĕнчи колхозсенче сыснасен йышĕ 58,5 процент, вăрçăчченхипе танлаштарсан, икĕ хут ÿснĕ. Сыснасен тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе те хăшпĕр çитĕнÿсем тунă. Анчах та ÿсĕм питех те çителĕксĕр. Иртнĕ çул район сысна ĕрчетмелли плана тултарайман.

Район сыснасем ĕрчетес тĕлĕшпе юлса пыни, чи малтан, çак ĕçе хакламаннинчен, фермăсенче зоотехникăпа ветеринари правилисене пурнăçа кĕртсе пыманнинчен килет.

Фермăсенчи сыснасен йышне тата вĕсен тухăçлăхне ÿстерес ĕçре выльăх апачĕ ытлăн-çитлĕн хатĕрлени пысăк вырăн йышăнать. Çак ыйтăва татса парасси тĕштырăран кăна килмест. Сыснасем валли çĕрулми, тымарçимĕç, пахча çимĕç, силос тумалли, пăрса йышши тата ытти курăксем ытларах ÿстерсе çитĕнтермелле. Районти нумай колхозсем çапла тумаççĕ, асăннă апатсене хатĕрлемелли плана çулсеренех тултармаççĕ. Партипе правительство кашни колхозра пăрса йышши тата пучахлă-шерепеллĕ курăксем акса сысна кĕтĕвĕсем çÿремелли вырăнсем тума хушаççĕ. Çак ĕçе те районта питĕ начар пурнăçласа пыраççĕ-ха.

Фермăсенче сыснасене зоотехника наукипе хушнă пек рацион тăрăх тăрантарассине организацилемен. Выльăх апачĕпе чылай çĕрте япăх усă кураççĕ, ăна тĕрĕс расходлассине кирлĕ пек йĕркелемен.

Выльăх апачĕпе тĕрĕс усă курасси, ăна выльăхсене çитерес умĕн лайăх хатĕрлесси—питĕ кирлĕ ĕç. Сăмахран, лайăх пухса кĕртсе хатĕрленĕ клевер, люцерна тата ытти курăксен утинче витаминсем, белок тата минераллă япаласем нумай. Çав утăна авăртса çăнăх тусан, выльăхсене ытти апатпа пĕрле парсан, пăспа вĕрилесе çемçетсе е çĕпрепе йÿçĕтсе çитерсен питĕ усăллă пулать. Кун пек апат çиекен сыснасем хăвăртрах ÿссе çитĕнеççĕ, çурламалли амасен çурисем нумайрах тата шултрарах пулаççĕ. Çавăнпа та кашни фермăра сыснасене утă çăнăхĕпе тăрантарассине йĕркелени кирлĕ. Анчах та Сĕнтĕр районĕнче уйрăм колхозсем çеç çак ĕçе тытăннă.

Фермăсенче ятарласа тунă кухньăсем сахал. Йывăр ĕçсене механизацилес тĕлĕшпе нимех те туман. Районти колхоз фермисенче мĕн пурĕ те 9 кормозапарник анчах, вăл шутран тăваттăшĕ—Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра. Фермăсенче çĕрулми çăвакан, çĕрулмипе тымарçимĕçсене тураса вĕтетекен тата ытти машинăсем çукпа пĕрех. Çав сăлтавсене пула ытти апатсене те сыснасене çитерес умĕн кирлĕ пек хатĕрлемеççĕ. «Путь Ильича» колхоз фермине çĕрулмине çуса тасатмасăр пĕçереççĕ, тĕштырăсене авăртмасăр параççĕ. Хăшпĕр колхозсенче сыснасене кăвакарнă, пăсăлнă апат параççĕ.

Тĕрĕс пăхса усрас тесен, сыснасене, уйрăмах çура ĕмĕртекен амасене кашни апат хыççăнах шăвармалла. Ферма работникĕсем чылай çĕрте çакна пурнăçламаççĕ.

Сыснасем сивĕ çĕрте выртса тăнă чухне пысăк çухатусем пуласран сыхланма, вĕсене шăнса пăсăласран е чирлесе виллесрен сыхлама хĕн. Çавăнпа та кашни фермăра типовăй проект тăрăх тунă витесем пулмалла. Çак задачăна выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине вăйлатма тăрăшакан колхозсенче лайăх ăнланаççĕ. «Колос», Жданов ячĕпе тăракан, «Çĕнĕ Юнкă» ялхуçалăх артелĕсем пĕлтĕр сыснасем валли лайăх витесем туса лартнă. Нумай колхозсенче вара иртнĕ çу кунĕсенче çĕнĕ витесем тăвас тата киввисене юсас ĕçе вăраха тăсса пынă. Çавăн пирки те строительство планĕсене тултарман. «Слава» колхоз виçĕмçул сысна вити тума тытăннă, халĕ те туса çитермен.

Районти ветеринарипе зоотехника работникĕсем, колхоз руководителĕсем сыснасене чир-чĕртен сыхлассине кирлĕ пек организацилемен. Фермăсенче тислĕке сысна витисем çумне тăкаççĕ. Вите алăкĕ умне урасене дезинфекцилеме ещĕк лартни пĕр фермăра та çук. Çакă вăл фермăсенче ĕç культурине хăпартассишĕн, тасалăхпа типтерлĕхшĕн пăн-чăн кĕрешÿ çукки çинчен калать.

Т. Д. Лысенко академик çапла вĕрентет: выльăх-чĕрлĕх ăратлăхне лайăхлатас ĕçе ăратлă выльăх-чĕрлĕх фермисенче çеç мар, кашни колхозрах туса пырас пулать. Сĕнтĕрсем çак чăнлăха ăнланса илмен-ха. Районти фермăсенче сыснасен ăратлăхне лайăхлатас ĕç начар пырать. Ăратлă сыснасем ĕрчетекен ферма районĕпе те пĕр «Çĕнĕ Юнкă» колхозра анчах. Ытти фермăсенче çак ĕçе япăхтарса янă.

Сысна ĕрчетес ĕçе сысна амисем хĕсĕр юлни те хытă чăрмантарать. «Новая жизнь» колхоз фермине пĕлтĕр 45 аман çурри ытла хĕсĕр çÿренĕ, тăватă сысна ами çеç икшер хут çурланă. «Знамя» тата «Ударник» колхозсенче хĕллехипе çуркуннехи вăхăтра сыснасем пачах çурламан. Сăлтавĕ паллă: фермăсенче сыснасене вăхăтра чуптарса хăвармаççĕ, вĕсенчен хăш вăхăтра çурасем илмеллине план тăрăх туса пымаççĕ. Пуриншĕн те паллă, февральпе март тата августпа сентябрь уйăхĕсенче çуралнă çурасем лайăхрах та хăвăртрах çитĕнеççĕ, ытлашши ир тата питĕ кая юлса çуралнă çурасем вара хуçалăхшăн усăсăр пулма пултараççĕ. Çакна чылай колхозсенче шута илмеççĕ, ноябрь—январь уйăхĕсенче илнĕ çурасене, условисем начар пирки, пăхса ÿстерейм еççĕ. Асăннă çитменлĕхсене пула ĕнтĕ, иртнĕ çул районти колхозсенче вăтам шутпа кашни сысна аминчен тăватшар çура ытларах çеç илнĕ.

Чылай колхозсенче сыснасене салатса пĕтереççĕ. Колхоз руководителĕсем сысна çурисене амăшĕсенчен уйăрнччен сутма тăрăшаççĕ. Вĕсене пысăк хакпа сутсан та колхозсем сахал тупăш илеççĕ. Иртнĕ çул районти колхозсенче сысна çурисене 52,7 процент салатса пĕтернĕ. Кăçал та пĕлтĕрхи йăнăшсене çĕнĕрен тăваççĕ.

Колхозсен государствăна самăр выльăх çеç парас пулать. Кунсăр пуçне сысна фермисенчен илекен тупăша ÿстерес ĕçре те сыснасене самăртса аш тата сало ытларах илесси пысăк вырăн йышăнать. Районта çак ĕçе начар организациленĕ. Çакна пула колхозсем пĕлтĕр сыснасене хупса усраса самăртмалли заданне çуррипе те пурнăçламан, государствăна сысна ашĕ памалли плана виçĕ пайĕнчен пĕр пайне самăртман сыснасен шучĕпе тултарнă.

Районти зоотехникăпа ветеринари специалисчĕсем ферма работникĕсене вĕрентсе хатĕрлес ĕçе питĕ сÿрĕккĕн туса пыраççĕ, хăйсен ĕçĕнче ответлăха туймаççĕ. Çакăншăн чи малтан районти ялхуçалăх пайĕ (заведующийĕ И. Кожаков юлташ) айăплă. Вăл организаторла ĕçе çителĕклĕ туса пымасть.

Сыснасен йышĕпе тухăçлăхне ÿстермелли пур майсемпе те усă курасси—кашни колхозăн пурнăçа кĕртсе пымалли задача. Сĕнтĕр районĕнчи колхоз правленийĕсен, мĕнпур колхозниксен тата зоотехникăпа ветеринари специалисчĕсен выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн çак питĕ кирлĕ отраслĕне вăйлатас тĕлĕшпе пăхсаннинчен тишлĕ ĕçлемелле.

М. ОСИПОВ.

Совет Правительстви Германипе мирлĕ договор тăвас пирки США, Великобритани тата Франци Правительствисене панă нота ҫинчен урăх ҫĕршывсенче мĕн сыраҫҫĕ

Демократиллĕ Германи Республики

БЕРЛИН, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви паян Совет Правительстви Германипе мирлĕ договор тăвас пирки США, Великобритани тата Франци правительствисене панă нотăн, ҫавăн пекех Германипе тумалли мирлĕ договорăн Совет Правительстви сĕнекен проектне хаҫатсем ҫинче пичетлеме панă.

Совет Правительстви США, Великобритани тата Франци правительствисене панă нотăна Демократиллĕ Германи Республикин радиостанцийĕ урлă темиҫе хутчен те вуласа панă.

БЕРЛИН, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Лейпцигри радио пĕлтернĕ тăрăх, Германин пур пайĕсенче те Совет Правительствин нотине хапăл туса йышăннă. Демократиллĕ Германи Республикинчи нумай предприятисенче Совет Союзĕн нотине ушкăнпа пухăнса итлес ĕҫе организациленĕ тата митингсем пуҫса иртнĕ.

Саксония-Ангальт ҫĕрĕнчи (провинцийĕнчи) миршĕн кĕрешекен комитет ҫакăн пек заявлени тунă: Совет Правительстви Германипе хăвăртрах мирлĕ договор тума требовани лартни вăл нимĕҫ халăхне шаннине ĕненмелле кăтартса парать. Нимĕҫ халăхĕ вăрçă чарăннăранпа ҫичĕ ҫул иртнĕ вăхăтра пур халăхсемпе те мирлĕ пурăнассишĕн нимĕнрен ытларах тăрăшать, тенĕ.

БЕРЛИН, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Правительстви Германипе мирлĕ договор тăвас пирки виҫĕ аслă державăна панă нота тата Германипе тумалли мирлĕ договорăн проекчĕ, асăннă нотăпа пĕрле яраа панăскер, Демократиллĕ Германи Республикинчи тата Берлинри халăх хушшинче хăвăрт саралнă, унти халăх вĕсене ырлать.

Берлин урамĕсемпе площачĕсене, радио репродукторĕ лартнă вырăнсене, халăх йышлă пухăннă. Пухăннă халăх Совет Правительстви Германипе мирлĕ договор тăвасси ҫинчен хĕвеланăҫĕнчи державăсене панă нотăна итленĕ, ăна кун каҫиччен радио тăрăх темиҫе хутчен те вуласа панă. «Нейес дейчланд», «Националь цейтунг», «Нейе цейт» хаҫатсем тата ыттисем те паян ятарласа Совет Правительствин нотине пичетленĕ номерсем кăларнă. Ятарласа кăларнă хаҫатсене Берлин халăхĕ пĕр самантрах илсе пĕтернĕ.

АДН агентстви паян Совет Правительствин ноти ҫинчен калакан хыпар Демократиллĕ Германи Республикинчи халăх хушшинче питĕ хăвăрт сарални ҫинчен пĕлтерет.

«Хĕвеланăҫĕнчи виҫĕ державăна панă нота тата Германипе тумалли мирлĕ договорăн никĕсĕсене Совет Союзĕ сĕнекен проекчĕ,—тенĕ АДН агентствин ҫак пĕлтерĕвĕнче,—пур ҫĕрте те халăхăн анлă массисене хумхантарчĕ. Предприятисенче тата халăх пурăнакан кварталсенче ҫав нотăна хĕрӳллĕ сӳтсе яваҫҫĕ».

АДН агентстви хальхи вăхăтчен Дрезденран, Хемницран, Герлитцран, Лейпцигран тата Демократиллĕ Германи Республикинчи ытти нумай хуласенчен илнĕ хыпарсенчен ҫакă курăнать: Совет Союзĕ нимĕҫ халăхĕн наци ыйтăвĕсене хӳтĕлес тĕлĕшпе тунă ĕҫне ĕҫе мĕнпур халăх хĕрӳллĕн тата хавасланса ырлать.

«Совет Правительстви хĕвеланăҫĕнчи державăсене нота пани ҫинчен пĕлтерекен хыпара тата Германипе тумалли мирлĕ договорăн никĕсĕсен проектне Нюрнбергра пурăнакансем питĕ хапăл туса йышăнчĕҫ, вăрçă иртнĕ вăхăтранпа нимĕнле политикăллă ĕҫ пирки те халăх ҫавăн пек хытă хумханман», тесе пĕлтерет АДН агентстви Нюрнберг хулинчен.

АДН агентствин пĕлтерĕвĕнче Нюрнбергри халăх Совет Союзĕн сĕнĕвĕсене хавасланса ырлани ҫинчен каланă.

БЕРЛИН, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палати мартăн 14-мĕшĕнче хăйĕн черетлĕ ларăвне пухăнать. Халăх палати хăйĕн ларăвĕнче СССР Правительстви Германипе мирлĕ договор тăвас пирки США, Великобритани тата Франци правительствисене панă нотăна пăхса тухать.

Польша

ВАРШАВА, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Правительстви Германипе мирлĕ договор тăвас пирки США, Великобритани тата Франци правительствисене панă нотăн пĕтĕм текстне тата Германипе тумалли мирлĕ договорăн Совет Правительстви сĕнекен проектне Польшăра радио тăрăх вуласа пĕлтернĕ.

Румыни

БУХАРЕСТ, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Бухарестри радио Совет Правительстви Германипе мирлĕ договор тăвас пирки США, Великобритани тата Франци правительствисене панă нотăн пĕтĕм текстне тата Германипе тумалли мирлĕ договорăн проектне вуласа панă.

Ҫак историллĕ документсене радио тăрăх вуласа панă чухне, вĕсене Румынири ҫĕршер пин ĕҫсыннисем итленĕ. Совет Правительствин калама ҫук паха пуҫарăвне Европăри тата пĕтĕм тĕнчери мире тĕреклетес енĕпе тунă пуҫарăва Румынири ĕҫсыннисем хапăл туса йышăннă. Ҫĕршыври рабочи клубсемпе ялти клубсенче нумайăшĕнче Бухарестри радиостанци пĕлтернине ушкăнăн-ушкăнăн пухăнса итленĕ.

Румыни телеграф агентстви Совет Союзĕ нотин текстне тата Германипе тумалли мирлĕ договорăн проектне хаҫатсем ҫинче пичетлеме панă.

Чехословаки

ПРАГА, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакири радио Совет Правительстви Германипе тумалли мирлĕ договор пирки США, Великобритани тата Франци правительствисене панă нотăн пĕтĕм текстне тата Германипе тумалли мирлĕ договор пирки Совет Правительстви хатĕрленĕ проекта, нотăпа пĕрле панăскерне, халăха пĕлтернĕ.

Ҫав документсемпе Чехословакири общественность хытă интересленет.

Болгари

СОФИЯ, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Правительстви Германипе мирлĕ договор тăвас пирки США, Великобритани тата Франци правительствисене панă нотăна тата Германипе тумалли мирлĕ договорăн Совет Правительстви сĕнекен проектне Болгарире хытă интересленсе кĕтсе илнĕ.

Паян Болгари телеграф агентствипе «Вечерни новини» хаҫат Совет Правительствин нотине пичетлесе кăларнă.

Венгри

БУДАПЕШТ, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Правительстви Германипе мирлĕ договор тăвас пирки США, Великобритани тата Франци правительствисене панă нотăпа Венгрире хытă интересленеҫҫĕ. «Вилагошшаг» хаҫат ҫав нотăна «Германипе тумалли мирлĕ договора хатĕрлесси ҫинчен пĕр тăхтаса тăмасăр калаҫусем пуҫламалла» текен заголовокпа пичетленĕ.

Совет Союзĕн нотине Будапештри радио тăрăх вуласа панă.

США

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Ирхине тухнă хаҫатсем Совет Правительстви Германипе мирлĕ договор тăвас пирки США, Великобритани тата Франци правительствисене нота пани ҫинчен пĕлтернĕ хыпара пичетлесе кăларнă.

Англи

ЛОНДОН, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Англири хаҫатсем халлĕхе Совет Правительстви Германипе мирлĕ договор тăвас пирки США, Великобритани тата Франци правительствисене панă нота тата Германипе тумалли мирлĕ договорăн Совет правительстви сĕнекен проекчĕ пирки Мускаври радио пĕлтернĕ тăрăх агентствăсем ҫырса хатĕрленĕ кĕске хыпара кăна пичетленĕ.

«Таймс» хаҫат нота пирки ытти хаҫатсенчен нумайрах ҫырать. Унта нотăн Рейтер агентстви пĕлтернĕ текстне пĕтĕмпех пичетленĕ. Анчах хаҫатра Германипе тумалли мирлĕ договорăн Совет Правительстви сĕнекен проекчĕн текстне пичетлемен. Нота пирки пĕлтерекен хыпара «Совет Союзĕ Германи пирки панă ҫĕнĕ нота, мирлĕ договор пирки панă сĕнӳсем», тесе ят панă.

«Дейли мейл», «Дейли геральд», «Ньюс кроникл», «Дейли экспресс» тата «Йоркшир пост» хаҫатсем пĕрремĕш страницăсенче питĕ кĕске хыпарсем пичетленĕ. Ҫав хыпарсенче Совет Правительстви мартăн 10-мĕшĕнче каҫхине Англи, США тата Франци дипломати представителĕсене «Германипе мирлĕ договор тăвасси ҫинчен ҫĕнĕрен калаҫусем пуҫарма сĕнекен» нота панă, тесе ҫырнă.

ЛОНДОН, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри виҫĕ хаҫатăн ирхине пичетленсе тухнă номерĕсенче Совет Правительстви США, Великобритани тата Франци правительствисене панă нота тата Германипе тумалли мирлĕ договорăн Совет Правительстви сĕнекен проекчĕ пирки кĕскен ҫеҫ асăннă.

Кун пирки «Стар» хаҫат пысăкрах пĕлтерӳ пичетленĕ, ăна «Вырăссем Германи ыйтăвĕпе калаҫусем пуҫлама чĕнеҫҫĕ», тесе ят панă. Пĕлтерӳре проектри тĕп положенисем ҫинчен кĕскен ҫырнă.

«Ивнинг ньюс» хаҫат Совет Союзĕн ноти ҫинчен пĕлтерекен кĕске хыпара пĕрремĕш страницăра пичетленĕ. Ҫак пĕлтерӳре хаҫат Совет Правительстви «ку ыйту тăрăх паракан ытти сĕнӳсене те пăхса тухма килĕшни ҫинчен пĕлтерет», тесе ҫырать.

«Ивнинг стандард» хаҫат нота ҫинчен пĕлтерекен кĕске хыпара пĕрремĕш страницăра пичетленĕ, ăна «Россия пĕрлĕхлĕ Германи туса хурасшăн», тесе ят панă. Пĕлтерӳре нотăн ҫак пайне — «мирлĕ договора Германи тӳррĕмĕнех хутшăннипе, Пĕтĕм Германи правительствипе хутшăнтарнипе ҫырса хатĕрлес пулать» тенине уйрăмах палăртнă.

Корейăри ĕҫсем

ХАЛĂХ ҪАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх ҫарĕн главнăй командованийĕ паян ҫапла пĕлтернĕ: фронтсенче уйрăмах паллă нимĕнле улшăну та пулман.

Паян Халăх ҫарĕн зенитнăй чаҫĕсем тата самолетсене хирĕҫ ҫапăҫакан салтакĕсем тăшманăн тăватă истребительне персе ӳкернĕ.

ПХЕНЬЯН, мартăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх ҫарĕн главнăй командованийĕ мартăн 12-мĕшĕнче ҫапла пĕлтернĕ:

Халăх ҫарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаҫĕсемпе пĕрле тăшмана хирĕҫ халиччен вырансенчех оборонăра тăрса ҫапăҫаҫҫĕ.

Халăх ҫарĕн зенитнăй чаҫĕсем тата самолетсене хирĕҫ ҫапăҫакан салтакĕсем тăшманăн виҫĕ самолетне персе ӳкернĕ.

Китай халăхĕ тарăхса питлени

ПЕКИН, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Америка агрессорĕсем Корейăра тата Ҫурҫĕр-Хĕвелтухăҫ Китайра бактериллĕ хĕҫпăшалпа усă курса тискер ĕҫ туни пĕтĕм Китай халăхне хытă тарăхтарать.

«Женьминьжибао» хаҫат паян ҫакăн ҫинчен пĕлтерет: Китайри мĕнпур районсенче пурăнакансем пысăк йышлă митингсенче тата хаҫат редакцийĕсене янă нумай ҫырусенче преступниксене хытă айăпласа пысăк наказани пама ыйтаҫҫĕ. Хаҫат пĕлтернĕ тăрăх, медицина институчĕсен студенчĕсем, сывлăх работникĕсем, ученăй-бактериологсем пур ҫĕрте те хăйсем Корейăна тата Ҫурҫĕр-Хĕвелтухăҫ Китая ерекен чирсене хирĕҫ кĕрешме каясшăн пулни ҫинчен пĕлтереҫҫĕ. Ҫапла, сăмахран, Шэньси провинцийĕнчи сывлăх работникĕсем 1.000 ҫын ытла, Чунцинра пурăнакансем 1.500 ҫын ытла, Цзянсу провинцийĕнчи медицина институчĕн 388 студенчĕ, Ҫурҫĕр-Хĕвелтухăҫ Китайри медицина институчĕн студенчĕсенчен 50 проценчĕ ытла тата ыттисем те хăйсене Корейăна тата Ҫурҫĕр-Хĕвелтухăҫ Китая, ерекен чир-чĕрсене хирĕҫ кĕрешекен отрядсенче ĕҫлеме яма ыйтса заявленисем панă.

Греци патриочĕсене хӳтĕлесе

ПАРИЖ, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Францири демократиллĕ общественность Белояннисе тата Грецин ытти патриочĕсене суд вĕлермелле туса приговор йышăннине хирĕҫ протестлет.

«Юманите» хаҫат Фредерик Жолио-Кюрипе Ирен Жолио-Кюри Греци премьер-министрĕ Пластирас патне янă телеграммăна пичетленĕ. Телеграммăра ҫапла каланă: «Пĕтĕм ҫĕр чăмăрĕ ҫинчи тӳрĕ кăмăллă мĕнпур ҫынсен требованийĕ пирки сирĕнтен ответ кĕтетпĕр. Белояннисе тата ыттисене суд вĕлермелле туса йышăннă приговорсене пурнăҫласине чарса лартăр. Пĕтĕмĕшле амнисти ҫинчен пĕлтерсен, ҫав вара эсир мире хӳтĕлес тĕлĕшпе усăллă ĕҫ туни пулĕччĕ».

Грецин сакăр патриочĕн пурнăҫне сыхласа хăварма ыйтса Ренн хулинчи (Илье Вилен департаменчĕ) пилĕк пин хĕрарăм Пластирас патне телеграммăсем янă.

«Юманите» хаҫат Бордо портĕнче ĕҫлекен рабочисем, Грецин пĕр карапне пушатнă ҫĕрте ĕҫлекенсем, Грецин сакăр патриотне ирĕке кăларма ыйтакан резолюцие карап капитанне панă.

Империалистсен Ҫывăх-Хĕвелтухăҫĕнчи планĕсем

БЕЙРУТ, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Ливанри «Нида аль-ватан» хаҫат Стамбулран ҫакăн пек хыпар илни ҫинчен пĕлтерет: «Авторитетлă ҫынсем каланă тăрăх, Вăтаҫĕр-Хĕвелтухăҫĕнчи командовани тăвас ĕҫе пуҫарнă тăватă держава (США, Англи, Франци тата Турци. — **Ред.**) хальхи вăхăтра Александретта районне Вăтаҫĕр-Хĕвелтухăҫĕнчи командованин штабĕ тăмалли вырăн туса хурас ыйтăва тĕпчесе вĕренеҫҫĕ».

«Тăватă держава Александретта районне «Вăтаҫĕр-Хĕвелтухăҫĕнчи командованин» штабĕ тăмалли вырăн туса хурас ыйтăва тĕпчесе вĕренме тытăннин сăлтавĕ ҫапла: вĕсем ҫав района стратеги енĕпе илсен паха тата юрăхлă район, Суэц каналĕпе Кипр районĕсенчен лайăхрах вырăн тесе шутлаҫҫĕ; вĕсем Александретта Вăтаҫĕр Хĕвелтухăҫĕнчи пур ҫĕршывсемпе те тинĕс ҫулĕпе, тип ҫĕр ҫинчи ҫулсемпе тата сывлăшри ҫулсемпе тӳррĕмĕнех ҫыхăнса тăнине шута илеҫҫĕ...», тесе ҫырать хаҫат.

Америка влаҫĕсем ҫар преступникĕсене ирĕке кăлараҫҫĕ

ТОКИО, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Ёнер Риджуэй штабĕн юридически секцийĕ Япони ҫар преступникĕсене тата тепĕр 11 ҫынна срокчĕнех ирĕке кăларни ҫинчен пĕлтернĕ.

Тĕнчери ҫĕршывсен Мускаври экономикăллă канашлăвĕ умĕн

ВАРШАВА, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Трибуна люду» хаҫат паян Тĕнчери ҫĕршывсен экономикăллă канашлăвне пухакан Тĕнчери пуҫару комитечĕн членĕ, ҫав канашлăва хатĕрленес тĕлĕшпе Польшăра ĕҫлекен комиссин председателĕ Оскар Ланге ҫырнă статьяна пичетленĕ.

— Хĕвеланăҫ Европăри ҫĕршывсенче—Англире, Францире, Италире, Хĕвеланăҫ Германире тата ытти государствăсенче Совет Союзĕпе, Китайпа тата Европăри халăх демократи ҫĕршывĕсемпе суту-илӳ тăвас ĕҫе вăйлатма ыйтни ытларах та ытларах илтĕнет,—тесе ҫырать Ланге.—Америкăн паллă промышленникĕсем ҫĕршывсем хушшинчи экономикăллă ҫыхăнусене лайăхлатма кирли ҫинчен ытларах та ытларах каласа параҫҫĕ, ҫĕршывсенчи обществăллă-экономикăллă системăсем кирек мĕнле пулсан та, вĕсем хушшинчи экономикăллă ҫыхăнăва лайăхлатмалла, теҫҫĕ. Ланге Японири, Индонезири, Пакистанри, Египетри тата Инҫет Хĕвелтухăҫĕнчи, Ҫывăх Хĕвелтухăҫĕнчи ытти ҫĕршывсенче те промышленниксемпе сутăҫсем мĕнпур ҫĕршывсемпе ҫыхăнса суту-илӳ тăвассине вăйлатассипе хытă интересленнине палăртать.

Обществăллă-экономикăллă системăсем тĕрлĕ пулнă пирки тĕнчери экономикăна искусственнăй майпа пӳлсе хунинчен Совет Союзĕ, Китай тата Европăри халăх демократи ҫĕршывĕсем пуринчен сахалтарах сиен кураҫҫĕ. Вĕсем географи тĕлĕшĕнчен пурте пĕр ҫĕрте. Ҫакă вĕсене экономика енĕпе никама пăхăнмасăр пурăнма чылай пулăшать. Вĕсем хăйсен экономикине плансем тăрăх йĕркелесе пыраҫҫĕ, пĕр-пĕринпе туслă килĕштерсе ĕҫлеҫҫĕ. Ҫавсене пула вĕсен хăйсен вăйĕ-хăвачĕпех аталанса пымалли условисем пулса тăнă. Ҫапах та ку государствăсем ытти мĕнпур ҫĕршывсемпе, хăйсен обществăллă-экономикăллă строй мĕнле пулнине пăхмасăр, суту-илӳ тăвас ĕҫе анлă сарассипе хытă интересленеҫҫĕ. Ҫавăн пек суту-илĕве вăйлатни вĕсен халăх хуҫалăхĕсем малалла аталанса пырассине, халăхсен экономика тĕлĕшĕнчи пурнăҫĕ лайăхланса тата культури ӳссе пырассине хăвăртлатма пулăшĕччĕ.

Совет Союзĕ, Европăри халăх демократи ҫĕршывĕсем тата Китай Халăх Республики экономика енĕпе ҫав тери вăйлă аталанни ҫав ҫĕршывсене тĕнчери суту-илӳ ĕҫне хутшăнма вăрçăччен хинчен чылай пысăкрах майсем парать. Ҫакăн пек условисенче,—тесе ҫырать Ланге,—тĕнчери ҫĕршывсен Мускаври экономикăллă канашлăвĕ питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕҫ пулать. Вăл тĕнчери суту-илĕве вăйлатма ҫав тери пысăк майсем пуррине кăтартса парĕ тата халăхсем мирлĕ экономикăна аталантарас енĕпе пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕҫлессине тĕреклетессинче пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕҫ пулĕ.

Польшăри хуҫалăхлă тата обществăллă организацисен представителĕсем тĕнчери ҫĕршывсен экономикăллă канашлăвне активлă хутшăнĕҫ,—тесе ҫырать Ланге. Иртнĕ ҫулта Польшăн промышленность продукцийĕ вăрçă умĕнхи шайран икĕ хут ҫурă ытла иртсе кайрĕ. Польшăн тулашри суту-илĕвĕнчи тавар ҫаврăнăшĕ пĕрмаях ӳссе пырать. Польша экономика аталанăвĕн хăвăртлăхĕсем ăна тĕнчери суту-илӳре пысăк вырăн йышăнса тăма май парать. Канашлăва хатĕрленес тĕлĕшпе Польшăра ĕҫлекен комитет Польшăн урăх ҫĕршывсенче мĕнле таварсем тата мĕн чухлĕ туянма, ытти ҫĕршывсене мĕнле таварсем тата мĕн чухлĕ сутма май пуррине палăртать, ҫавăн пекех тĕнчери ҫĕршывсем хушшинчи суту-илĕве вăйлатас ыйтусене тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе ĕҫлет.

МОНТЕВИДЕО, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Импренса популар» хаҫат пĕлтернĕ тăрăх, Бразилири халăхăн тĕрлĕ сийĕсем тĕнчери ҫĕршывсен Мускаври экономикăллă канашлăвне пухнине ырлаҫҫĕ. Хаҫатра Пернамбуко штачĕ столицинчен—Ресифе хулинчен пĕлтернĕ хыпар пичетленнĕ. Ку хыпарта Пернамбуко штачĕнчи законсем йышăнакан ассамблейăн нумай депутачĕсем Бразилин ҫав канашлăва хутшăнмалла тесе калани ҫинчен ҫырнă, ҫавăн пек калакан нумай депутатсен хушамачĕсене асăннă. Бразилин тĕнчери ҫĕршывсен экономикăллă канашлăвне хутшăнмалла тесе калакансем хушшинче паллă промышленниксемпе сутăҫсем те пур.

ТĔНЧЕРИ ЭКОНОМИКĂЛЛĂ КАНАШЛĂВА ЯПОНИ ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕМ ХУТШĂНАС ПИРКИ

ТОКИО, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Японири хаҫатсем пĕлтернĕ тăрăх, советниксен палатин членĕ пулнă Хоаси тата парламента прогрессивнăй партирен суйланнă депутат Миякоси Токио облаҫĕн судĕнче Япони правительствине хирĕҫ ĕҫ пуҫарнă. Япони правительстви вĕсем Тĕнчери ҫĕршывсен экономикăллă канашлăвĕнче пулмалли ҫынсене Мускава кайма паспортсем памашăн айăпласҫĕ.

Фредерик Жолио-Кюри чĕнсе калани

ПАРИЖ, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн председателĕ Фредерик Жолио-Кюри мĕнпур ҫĕршывсенчи ĕҫсыннисене ҫапла чĕнсе каланă:

«Эпĕ питĕ хумхантаракан ҫырăва вуласа тухрăм. Ҫав ҫырура Китай халăхĕн мире сыхлас тата Америка агрессине хирĕҫ кĕрешес тĕлĕшпе ĕҫлекен комитечĕн председателĕ Го Мо-жо мана Америка хĕҫпăшаллă вăйĕсем Корейăра бактериллĕ хĕҫпăшалпа усă курни ҫинчен пĕлтерчĕ.

Январĕн 28-мĕшĕпе февралĕн 17-мĕшĕ хушшинчи тапхăрта Америка ҫар самолечĕсем Корейăра, унти фронтра та, тылра та чума, холера, тиф тата ытти хăрушă та хăвăрт сарăлакан чирсен микробĕсене сарса ҫӳренĕ.

Ас-тăнлă мĕнпур ҫынсем шучĕпе ҫавăн пек тискер ĕҫсене нихҫан та тума юрамасть. Ҫапах та ҫав питĕ тискер ĕҫсене тунă. Ҫак тискер ĕҫсем ĕлĕкрех атомлă бомба пăрахса темиҫе секунда хушшинче Хиросима хулинчи ҫĕршер пин ҫынсене пĕтерсе тăкнă тискер ĕҫ пекех. Ку тискер ĕҫсене туни, ҫавăн чухнехи преступлени пекех, питĕ пысăк преступлени пулса тăрать.

Бактериллĕ хĕҫпăшалпа усă курни вăл тĕнчери ҫĕршывсем 1925 ҫулхи июнĕн 17-мĕшĕнче Женевăра ҫырса алă пуснă протокола тепĕр хут ӳссăнах пăсни пулса тăрать.

Бактериллĕ хĕҫпăшалпа Япони ҫарĕсем Китайра вăрҫă чухне усă курнă пулнă. США Генеральнăй штабĕ тата политикăллă деятельсем ҫав хĕҫпăшалпа усă курма хатĕрленни тата шутлани ҫинчен уҫҫăнах пĕлтерчĕҫ ĕнтĕ.

Ҫав преступлениллĕ ĕҫсем Пĕтĕм тĕнчери миршĕн тăракансен Варшаври конгресĕ йышăннă решенисене—пĕтĕм халăх ирĕкне палăртса тăракан решенисене хирĕҫле ĕҫ туни, конгрес бактериллĕ, химиллĕ хĕҫпăшалпа тата халăха йышлăн пĕтерекен ытти кирек мĕнле хĕҫпăшалпа та усă курассине чарса лартмалли ҫинчен йышăннă резолюцие хирĕҫле ĕҫ туни пулать.

Ҫавăн пек хĕҫпăшалсене чарса лартма Стокгольмри воззвани ҫине алă пуснă 500 миллион ҫын—арҫынсемпе хĕрарăмсем ыйтрĕҫ. Ҫынсене тĕпех ҫавăн пек вĕлерсе пĕтерме чармалла тесе вĕсем уҫҫăнах каларĕҫ.

Паян халăхсем вĕсене мĕн тери пысăк хăрушлăх хăратса тăнине, вĕсене мĕн тери хăрушă хатĕрсемпе усă курса хăратса ӳкерме хăтланнине ăнланса илме пултараҫҫĕ. Тĕнчери общественноҫăн ҫав преступление хирĕҫ кĕрешме ҫĕкленес пулать.

Фредерик Жолио-Кюри».

ТУРЦИРЕ ДЕМОКРАТСЕНЕ АРЕСТЛЕҪҪĔ

СОФИЯ, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Турцири хаҫатсем ҫинче Турцин прогрессивнăй шухăшлă гражданĕсене арестлени ҫинчен ҫырнă. «Ватан» хаҫатра ҫырнă тăрăх, мартăн 9-мĕшĕнче Стамбулра «коммунистла пропаганда» тунăшăн Ариф Чалышканпа Исмет Марич рабочисене, Хюсню Оздемир студента тытса хупнă. Вĕсемсĕр пуҫне, тепĕр студента тытса хупнă, унăн ятне хаҫатра асăнман.

«Хюрриет» хаҫат Назильре пир-авăр фабрикинче ĕҫлекен ултă рабочие тытса хупни ҫинчен пĕлтерет. Арестленĕ ҫынсене «государствăна хирĕҫле ĕҫсем» тунăшăн суда парса айăпласҫĕ.

«Ени Истанбул» хаҫат пĕлтернĕ тăрăх, Мугла Вилайетĕнчи, Кейджегиз уездĕнчи Далян ялĕнче Зуган Гюзельпе Захар Атаман рабочисене арестленĕ.

„Чăваш Коммуни" хаҫат парнисене илмелли ăмăртăва хатĕрленеҫҫĕ

Мартăн 12-мĕшĕнче «Искра» спорт обществин Чăваш Совечĕн ларăвĕ пулнă. Унта «Чăваш Коммуни» хаҫат парнисене илмелли ăмăртăва хутшăнакан командăсене пăхса тухса ҫирĕплетнĕ. Ҫак обществăран пĕррремĕш ушкăн енĕпе йĕлтĕрҫĕсен эстафетăллă ăмăртăвне икĕ команда (пĕр команди Чăвашсен педагогика институтĕнчен), вырăнсенчи физкультура коллективĕсем енĕпе—1-мĕш номерлĕ типографирен икĕ команда хутшăнать. Иртнĕ ҫул иртнĕ эстафетăллă ăмăртура «Чăваш Коммуни» хаҫатăн кусса ҫӳрекен парнине—Хĕрлĕ ялавне «Искра» спорт обществин команди ҫĕнсе илнĕ. Ҫак командăра кăҫал та пурте тенĕ пек иртнĕ ҫулхи ăмăртура палăрнă пĕррремĕш разрядри М. Михайлов, В. Михайлов, А. Мартынов, А. Ермолаев, Л. Вилюнова, З. Мясникова, иккĕмĕш разрядри Ю. Торопов тата ытти паллă йĕлтĕрҫĕсем пулаҫҫĕ. «Чăваш Коммуни» хаҫат парнине ҫĕнсе илес, хĕллехи спорт сезонĕ вĕҫленнĕ ятпа иртterекен массăллă ăмăртура пысăк ӳсĕм тăвас тесе вĕсем час-часах тренировкăсене хутшăнаҫҫĕ.

«Чăваш Коммуни» хаҫатăн кусса ҫӳрекен парнине—Хĕрлĕ ялавне 1950 ҫулта ҫĕнсе илнĕ «Медик» спорт обществинчи йĕлтĕрҫĕсем те ăмăртăва тăрăшса хатĕрленеҫҫĕ. Ҫак обществăн командинче те, «Искра» спорт обществин командинчи пекех, республикипе паллă физкультурниксемпе физкультурницăсем — Токарева, Краснослова, Губанова, Жачева, Смирнова, Гаврилов тата ытти йĕлтĕрҫĕсем пулаҫҫĕ.

Иртнĕ ҫулхи эстафетăллă ăмăртура ҫамрăксен командисене памалли парнене—вымпела Электромеханически техникумри, хĕрсен командисене памалли вымпела—Кооператив техникумĕнчи йĕлтĕрҫĕсен командисем ҫĕнсе илнĕччĕ. Кăҫалхи эстафетăллă ăмăртăва Кооператив техникумĕнчен икĕ команда хутшăнать, йĕлтĕрҫĕсене ăмăртăва хатĕрлес енĕпе техникумри физкультура преподавателĕ, СССР спорт мастерĕ М. Гущина юлташ тăрăшса ĕҫлет.

Электромеханически техникумра ăмăртăва хутшăнма ҫамрăксем енĕпе 3 команда, хĕрсем енĕпе—1 команда организациленĕ.

— «Чăваш Коммуни» хаҫат парнине кăҫал та хамăрах ҫĕнсе илме ĕмĕтленетпĕр,—тет техникумри физкультура преподавателĕ Кузнецов юлташ.

«Спартак», «Динамо», «Буревестник», «Красная звезда», «Молния» тата ытти спорт обществисенчи йĕлтĕрҫĕсем те эстафетăллă ăмăртăва хатĕрленеҫҫĕ.

Тӳрлетни

«Чăваш Коммуни» хаҫатăн 52-мĕш номерĕнче «Наци ыйтăвĕн ленинла-сталинла программи тата ăна Совет Союзĕнче ăнăҫлă пурнăҫлани» ятлă статьяра иккĕмĕш абзацăн пуҫламăшне ҫапла тӳрлетсе вуламалла:

«Наци ыйтăвĕн ленинла-сталинла программине пĕр пăрканмасăр пурнăҫласа пырса, 1922 ҫулта, Пĕтĕм Союзри Советсен Пĕррремĕш съездĕнче, халăхсен пĕртанлăхĕн тата ирĕклĕхĕн никĕсĕсем ҫинче Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне туса хунă».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ
Паян, мартăн 14-мĕшĕнче, вырăсла спектакль
„Поют жаворонки"
Ыран, мартăн 15-мĕшĕнче, вырăсла спектакль
„ЖЕНИТЬБА"
Спектакльсем каҫхине 8 сехетре пуҫланаҫҫĕ.

„Родина" кинотеатрта
Паян, мартăн 14-мĕшĕнче, кăнтăрлахи сеанссенче ҫĕнĕ илемлĕ фильм
„Пржевальский"
каҫхи сеанссенче —
„Богатая невеста"
Кăнтăрлахи сеанссем 12, 14, 16 сехетре, каҫхи сеанссем 18.15, 20 тата 22 сехетре пуҫланаҫҫĕ.

Шупашкарти тата республикăри кинотеатрсенче
Н. В. Гоголь ҫырнă повесть тăрăх кăларнă
„НОЧЬ ПЕРЕД РОЖДЕСТВОМ"
ятлă мультипликациллĕ ҫĕнĕ илемлĕ фильм кăтартма пуҫлаҫҫĕ.
Сценари авторĕсем—В. Брумберг, З. Брумберг тата М. Яншина,
Музыки—Н. Римский-Корсаковăн.
Фильма лартаканĕсем—В. Брумберг тата З. Брумберг.
Эскизсем—А. Петрицкин.
Художникĕсем—Н. Строганова, А. Беляков, П. Репкин.
Операторĕ—Н. Войнов.
Сасă операторĕ—Н. Прилуцкий.
Фильма «Союзмультфильм» 1951 ҫулта ӳкернĕ.
Экрансем ҫине «ГЛАВКИНОПРОКАТĂН» Чăваш республикинчи кантурĕ кăларать

Театр абонеменчĕсене илнĕ ҫынсене пĕлсе тăма

Чăваш государство академи театрĕн дирекцийĕ ҫапла пĕлтерет: театра ҫӳреме илнĕ абонементсем 1952 ҫулхи апрелĕн 30-мĕшĕччен кăна юрăхлă. Кăҫалхи майăн 1-мĕшĕ хыҫҫăн театр ку ыйтупа нимĕнле претензи те йышăнмасть.

ДИРЕКЦИ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăҫ пайĕ—4-17, ялхуҫалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, ҫырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00353 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата Тираж 20.000 экз.